Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 16 ШАМАТКУН 162 (4975) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ.* Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 5—57. Ред. заместителĕн 5—55. Редакци секретарĕн 4—46. Дежурнăйĕн 6—23

РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ

Пайан—РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлнă кун. Аслă халăх суйланă çынсем, тĕнчери чи демократилĕ ирĕкĕ-кăмăлĕ тăрăх 60 000.000 суйлавçă влаçа суйласа таратнă çынсем государствăлă ĕç тума тытăнаççĕ.

РСФСР-ĕнчи пĕтĕм суйлавçăсен 99,3 проценчĕ, хăйсен ирĕкне-кăмăлне кăтартса памашкăн, ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлав йешчĕкĕсем патне пычĕç. Суйлава хутшăннă пĕтĕм суйлавçăсен 99,3 проценчĕ хăйсен сассисене коммунисем партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсене пачĕç, хăйсем пĕр çын пек пĕр кăмăллă пулнине тата Ленин—Сталин партийĕпе совет правительстви тавра тачă та çирĕп пĕрлешсе тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕç.

Çапла историлĕ сасăласа ĕнтĕ Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикин аслă органĕн составне чи лайăх çынсене, хăйсен пĕтĕм пурнăçне халăх телейĕшĕн—ырлăхĕшĕн паракан, ĕç çыннисен тăшманĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре тĕреслenсе, пиçĕхсе тухнă, социалисăма веçĕ-хĕррисĕр йуратакан çынсене пухнă.

Пĕтĕм халăхăн суйланă çынĕпе—Конституци творецĕпе—Сталин йулташпа пĕрле РСФСР Верховнăй Совечĕн составне унăн чи лайăх соратникĕсем, ĕçпе кĕрешÿре тĕрĕсленсе тухнă политикăлă борецсем—Коммунисла Партин Сталинла Тĕпкомĕн членĕсем кĕреççĕ. Вĕсемпе пĕрле государствăлă аслă задачăсене татса парас ĕçсене тумашкăн Сталин питомĕцĕсемпе ученикĕсене — рабочисемпе колхозниксене, парти работникĕсемпе хуçалăх ĕç работникĕсене, льотчиксемпе краснофлотецсене, учонăйсемпе артиссене суйланă. Вĕсен йачĕсемпе пирĕн çĕршыв мухтанать; вĕсен биографийĕсенче пирĕн çĕнтерÿсен историйĕ.

РСФСР Верховнăй Советне суйланă кунсенче Совет Сойузĕн Геройĕ Папанин йулташ çапла çырнă:

„Ирĕклĕх патне илсе ыракан çула ытти халăхсене шăпах епĕр, вырăс çыннисем, кăтартса панипе мухтанма пирĕн права пур. Ленинăн—Сталинăн пролетарилĕ геройла партине çуратса ÿстернĕ, тĕнчери чи революцилĕ вырăс пролетариачĕшĕн епĕр калама çук аслă мухтану туйăмĕпе хепĕртетпĕр. Пирĕн халăх хушшинче ленинисăм—вырăс культурин чи çÿлте тăракан çитĕвĕвĕ çуралса тухнипе епĕр мухтанатпăр".

Ку сăмахсенче—мĕлйунсен шухăшĕсемпе туйăмĕсем. Хамăрăн телĕнмеле ырă çĕршыва ирĕклĕх кĕрешсе илсе парас тесе, хамăрăн тăван çĕршывăн пуйан та тулăх çĕрĕ çиййĕнче социалисăмлă революци хĕвелĕ çуталса кайтăр тесе, вырăс халăхĕн чи лайăх ывăлĕсем хăйсен пурнăçĕсене панă. Епĕр суйланă çынсен—РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен—телейĕ тĕлне аслă чыс—вырăс халăхĕн тата Российă Федерацинчи ытти халăхсен представителĕсем пулса тăрас чыс тухрĕ. Вăл чыс пысăк ответлăхпа, калама çук пысăк обйазаннăçсемпе çыхăнса тăрать. Пирĕн депутат—халăх посланецĕ, унăн йарçи, унăн ирĕкĕпе кăмăлне пурнăçа кĕртсе пыракан. А халăх ирĕкĕпе кăмăлĕ паллă та уçă тата нихăçан та тĕрĕс çултан пăрăнас çук. Халăх шанăçне тÿрре кăларас тесе, депутат сталинла наказа пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе алăсене канăç памасăр ĕçлеме тивĕç. Суйлав умĕнхи пур пухусенче те халăх хăйĕн депутачĕсенчен, Сталин депутатсене панă аслă наказа асра тытса тăма ыйтрĕ:

„... депутатсем хăйсен задачисен çÿллĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывателсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлĕ политикăлă деятелсен вырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар-уçă та паллă деятелсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешÿре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан, горизонтра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ÿкесрен те, кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччăр, вĕсем кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, пысăк ыйтусене татса панă çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, ăслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тÿрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех, йуратчăр".

Сталинăн çак наказĕ—кашни депутатăн ĕç программи. РСФСР Верховнăй Совечĕ çак пĕтĕм халăх наказне халăх телейĕшĕн, хамăрăн йуратнă хăватлă тăван çĕршывăмăра малала татах çирĕплетессишĕн пыракан ĕçсен йалавĕ вырăнне тытса çĕклет.

Пĕтĕм халăх праçникĕ—сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ иртнĕ-иртменех, кулленхи творчествăлă ĕç пуçланнă-пуçланманах, пĕтĕм çĕршыв, пĕр вĕçрен тепĕр вĕçне çитиччен, мĕлйунлă сасăсемпе çĕнĕ тĕлĕнмеле чаплă ĕçсемпе каласма пуçларĕ, вăл ĕçсенче совет патриотисăмĕн, социалисăмлă паттăрлăхăн аслă çутти йалтăраса кайрĕ.

Мухтавлă сокăлсем—льотчиксемпе льотчицăсем совет çар авиацин хĕрлĕ ăмăрт-кайăк çуначĕсем çинче пирĕн çĕршывăн чăпне хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçне тата кантăрган çурçĕре çĕклесе карĕç.

Сталинла Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома пирĕн пĕтĕм халăх калама çук пысăк çĕкленÿпе, вăйлă хастарлăхпа хапăллать, зайома тимлĕн çырăнассине партипе совет влаçĕ пуçаракан мĕн пур ĕçсене хĕрÿллĕн ырланине кăтартакан калама çук вăйлă манифестаци туса хурать.

Ĕç хастарлăхĕ çĕкленнин хăватлă йухамĕ пĕтĕм çĕршыв тăрăх çĕнĕрен сарăлса пырать, вăл йухăм рабочисемпе колхозниксем хушшинче çĕнĕрен чаплă стахановла усĕмсем çуратать.

Совет чукунçулĕсем çинче ĕçлекенсен мухтавлă çарĕ хăйĕн сталинла халăх комиссарĕ Л. М. Кагнович йулташ йертсе пынипе тавар тийес плана кунсерен иртерсе тултарать.

Н. И. Йежов йулташ большевикла чаплăн йертсе пынипе водниксем хăйсен ĕçне йусаса йараççĕ. Таварсем тийес ĕçре стахановец Блидман йулташ сĕннĕ ытарайми паха методсемпе усă курса, Омск пристанĕнчи Куломзинск причалĕнче ĕçлекен çамрăк рабочи-механизатăрсем, Дойченко комсомолец тата Чернышов моторист йертсе пынипе, нормăна ăнаçлăнах темиçе хут ирт рсе тултараççĕ.

Хуçалăхăн ытти отрăçлисем те хăвăртлăхсене вăйлатса пыраççĕ.

Классон йачĕпе тăракан предприйати гидроторф тупас çезон планне срукчен тултарнă. Кунта Большаковпа Йевтейĕв йулташсен бригадисем уйрăмăнах палăрнă, вĕсене малтан Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ „Похвальнăй лист" парса наградăланă пулнă.

Паллă та чаплă комбайнер, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Константин Борин йулташ, Краснодар крайĕнчи тырпул пухса кĕртме тухса кайсан, çав тери пысăк ăнаçу тунă: вăл хăйĕн аггрегачĕпе пĕр кун хушшинче 130 гектар тулă вырнă. „Искра" колхозри звенийевой (Алтай крайĕ) РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ М. Йефремăв йулташ колхозниксем сталинла тырпулшăн çине тăрса тимлĕн кĕрешнин çинчен пĕлтерет: ĕнтĕ иртнĕ çултах хăшпĕр колхозсенчи звеносем гектартан 60—80 центнĕр тырă туса илнĕ; хальхи вăхăтра, çав депутат йертсе пыракан звено, гектартан 100 центнĕр тĕштырă туса илме шутлать:

„Пире Верховнăй Совет çессине йанă чухне,—тесе каласа парать вăл,—хавасла, телейлĕ пурнăçшăн Алтай крайĕнчи колхозниксем Сталин йулташа тав туma ыйтрĕç... Çĕнĕ тырпултан чи малтанхи, чи лайăх тĕштырăна государствăна паратпăр".

Çавăн пек ĕнтĕ совет çыннисен шухăшĕсемпе туйăмĕсем.

Хăйсем суйласа йанă депутатсене большевикла ĕçсемпе саламласа, пирĕн çĕршыври ĕççыннисем РСФС Республикĕнчи влаçăн чи аслă органĕ мĕнле ĕçленине калама çук пысăк интереспа сăнаса тăчĕç. Пирĕн совет стройĕ кашни кун тĕреклenсе пырать. Пирĕн халăхăн ырлăхĕ коммунисăмшăн кĕрешнинчен уйăрăлса тăмасть. Коммунисăм идейисемпе аварланнă, хăйĕн массисемпе çирĕп çыхăнса тăракан, Ленин—Сталин парти тавра пĕтĕçнĕ пирĕн депутатсем государствăлă пысăк задачăсене татса пама тытăнаççĕ. Пĕтĕм çĕршыв хăй суйласа йанă депутатсене пирĕн тăван çĕршывăн чапĕшĕн, совет халăхĕн телейĕшĕн ăнаçлăн ĕçлеме хĕрÿллĕн ырă сунать.

(„Правда" умстатйи, ийулĕн 15-ш).

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): Оçипенко, Раскова тата Ломако йулташсем. Вĕсем, çар льотчицисем, Совет çĕршывĕн хĕрÿллĕ патриоткисем, гидросамольотпа Севастопольрен Архангельска чаплă вĕçев турĕç.

(„Прессклише").

Калама çук чаплă вĕçев

„Мускав" йатлă çерилĕ самольотпа Мускавран Владивосток районне çитиччен калама çук чаплăн вĕçсе тухса, Коккинакипе Брйандинский йулташсем хăвăрт та пĕр лармасăр вĕçес тĕлĕшпе çĕнĕ рекорд турĕç. Пĕр талăк хушшинче вĕсем 7.600 километр тăршшĕне вĕçсе тухнă. Граждăн авиацин самольочĕсем Мускавран Владивостока çитмешкĕн 5—6 кун хушши вĕçеççĕ.

Коккинакипе Брйандинский вĕçевĕ хуçалăхпа культурă тĕлĕшĕнчен мĕнле калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине хаклама та йăвăр. Вĕсем Мускав—Владивосток районĕ трасси çинче вĕçнĕ хăвăртлăхпа çерилĕ машинă çинче вĕçни халиччен ниçта та, никамăн та пулман-ха. Вĕсем вăтам шутпа сехетре 300 километртан иртекен хăвăртлăхпа вĕçнĕ.

Коккинакипе Брйандинский йулташсем хăйсен вĕçевĕпе, совет авиацийĕ мĕн тери ÿссе кайнине кăтартса пачĕç. Нумайах пулмасть-ха Англи льотчикесем Англирен Йегипета çитиччен, сăмах майăн каласан, Коккинаки вĕçевĕ хыççăн, вĕçни çакна кăтартса парать: пирĕн сывлăш флочĕн ыттисенниичен ытларах лайăх, ытларах инçене те хăвăрт вĕçекен самольотсем пур. Англичанинсем 4.300 километр тăршшĕ çул çинче сехетре пурĕ те 155 миль (милă—1,6 километр) çеç туса вĕçсе пынă.

Коккинакипе Брйандинский йулташсем икĕ çын лармали самольот çинче вĕçсе хăвăртлăх рекорчĕ турĕç, çакăнпа пĕрлех вĕсем хамăрăн аслă тăван çĕршывăмăр столици патĕнчен Лапка океан çыранĕсем патне çитиччен çĕнĕ, чи кĕске çул хыврĕç.

Епĕр, граждăн сывлăш флочĕн работникĕсем, халех те ĕнтĕ Мускавпа Владивосток хушшинче тÿрĕ çыхăну организацилес план пирки ĕçлеме тытăннă.

Инçетри хĕвелтухăçпа сывлăш тăрăх çыхăнса тăрассине 2—3 хут хăвăртлатни, вăл крайпа çĕршыв столици хушшинчи економикăлă çыхăнăва вăйлатать, вăл калама çук пуйан крайăн инкĕлми ресурсĕсене алла илмешкĕн тата ытларах пулăшать.

Коккинакипе Брйандинский—çĕнĕ сывлăш çулĕн пионерĕсем. Анчах епĕ çакна шанса тăратăп: сывăх вăхăтсенчех ытти вуншăр хăйлă Совет льотчикĕсем тата ытти сывлăш çулĕсем хурĕç, унтан вăл çулсем кулленхи пурвăçри, лайăх вĕçсе алла илнĕ линисем пулса тăрĕç.

Хальхи вăхатра Совет Сойузĕнчи ĕçлекен авиолинисен тăршшĕне пĕр çĕре илсе шутласан, вăл 100.000 километра çитет. Калама çук пысăк масштабсем! Çĕнĕ чи кĕске сывлăш магистралĕсем шырамашкăн çавăн пек анлă майсем пирĕн çĕршывра кăна пур, ун пек çĕршыв тĕнчере те урăх çук. Пирĕн тăван çĕршыв, пирĕн тăван большевикла парти хăйсен мухтавлă соколĕсене вĕçĕ-хĕррисĕр йуратаççĕ, вĕсем çине ăшă тимлĕхпе пăхаççĕ. Вĕсене анлă творчествăлă ĕç тума кирлĕ пур условисене те туса параççĕ. Пирĕн йуратнă çулпуçăмăр аслă Сталин льотчиксене çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантарса тăрать, вĕсене пулăшать, вĕсемшĕн тăрăшать. Пирĕн сывлăш геройĕсем тата пĕрре çеç мар-ха пĕтĕм тĕнче рекорчĕсене тăвĕç тесе, пирĕн авиацине пуринчен те малта пыракан чи чаплă никам çĕнтерейми авиаци туса хурĕç тесе, шанса тăратăп епĕ.

Çĕнĕ сывлăш çулĕ хывакан пионерсене—салам!

В. МОЛОКĂВ—Совет Сойузĕн Геройĕ. Граждăн сывлăш флочĕн Тĕп управлени начальникĕ.

Штурман А. М. Брйандинский

(„Прессклише")

Говард Йуз Совет Сойузне тав тăвать

НЬЙУ-ЙОРК, ийулĕн 14-мĕш. (ТАСС). Америкăри пичет совет çĕршывĕнчи влаçсем Говард Йуза вăл вĕçеве тытăниччен те тата Совет Сойузĕн территорийĕ çийĕпе вĕçнĕ чухне те, калама çук пысăк пулăшу пани çинчен паллă туса çырать.

Хаçатсем çав вăхăтрах Германи правительстви çав вĕçев çине пачах урăхла пăхнине паллă тăваççĕ. Германи правительстви Йуз Германи территорийĕ çийĕпе вĕçсе иртнĕ чухне ăна питĕ те çÿлте вĕçме хушнă тата вĕçессе те Германи çар влаçĕсем йатарласа кăтартнă çулпа вĕçсе иртме хушнă.

Говард Йуз вĕçевне сăнаса пырса, Америкă халăхĕ совет аеродромĕсене, радиослужбине тата техникăлă ытти хатĕрсене пысăккăн хаклать, вăл совет государстви аслине тата хăватлине куçа кĕретĕнех курса ĕненет.

Говард Йуз Фербенксран хăйĕн самольочĕ çинчен радио тăрăх панă пĕлтерÿвĕнче ССР Сойузĕн территорийĕ çийĕпе вĕçнĕ чухне ăна пулăшу панăшăн Совет Сойузне пысăккăн тав тунă. „Совет радиоинженерĕсем,—тесе каланă çав саламра,—пире мĕн кирлине йăлтах туса пачĕç". Унтан Йуз самольочĕ çинчи çынсем пурте Йакутскри аеродром çине анса ларсан, вĕсене ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн Йакутск халăхне хĕрÿллĕн ырă сунса тав тунă.

Говард Йуз çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăннă

НЬЙУ-ЙОРК, ийулĕн 14-мĕш (ТАСС). Америкăн паллă льотчикĕ Говард Йуз Ньйу-Йорк вăхăчĕпе 13 сехет те 37 минутра Ньйу-Йорк çывăхĕнчи аеродрома анса ларнă, çапла вара вăл çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе тĕнчери çĕнĕ рекорд тунă.

Пурне те паллă, Америкă льотчикĕ Вилли Пост 1933 çулта çĕр чăмăрĕ тавра 7 талăк та 18 сехет те 49 минут хушшинче вĕçсе çаврăннăччĕ.

Йуз çĕр чăмăрĕ тавра 3 талăк та 19 сехет те 17 минут хушшинче вĕçсе çаврăннă, çак вăхăтра вăл 23.680 километр вĕçнĕ.

Аеродромра Говард Йуза чаплăн кĕтсе илнĕ, ăна кĕтсе илнĕ çĕрте 30.000 çын пулнă.

Кашни ĕççыннине зайом çырăнтарасси—парти тата совет организацисен пайан тумали ĕçĕ

Зайом тытакансем хушшинче тăтăшах ĕçлемеле

Шупашкар хулинче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне сарасси анлăн сарăлса пырать. Пайанхи куна 276 коллективран 268 коллективра зайом çырăнна. Хулара пĕтĕмпе çĕнĕ зайома 2.217 270 тенкĕлĕх сарнă. Иртнĕ çулта оборонă зайомне ку тĕле 1.647.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă пулнă.

Çав вăхăтрах зайом сарас ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Сакăр коллективра зайом сарма тытăнман та. Акă вĕсем: Ампарти вредителĕсемпе кĕрешекенсен правленийĕ, Чăвашсойузăн утильбази, Атăл леш йенчи канмали çурт, хăлхасăр-куççăрсен шкулĕ, республикăри пионерсен лагерĕ, пурăнмали çуртсен хуçалăхĕ йенĕпе ĕçлекенсен сойузĕн группкомĕ, пристань.

Зайом çырăнса пĕтмен коллективсем те пур. Уйрăмăнах Стройтрестăн иккĕмĕш участкари рабочисем, Макарон хапрăкенчи рабочисем, Госфилармони служащийĕсем хушшинче зайом çыранмасăр йулнисем пур. Государства банкĕн коллективĕ зайома ăнаçлăн сарас ĕçре ытти учреждевисене ырă пример парас вырăнне, хулана кайала тÿртса пырать. Унта зайома халĕ те вырнаçтарса çитереймен-ха.

Рабочисен, служащисен, ĕççыннисен пурнăçĕ çулран çул лайăхланса пырать. Ăна ĕççыннисем перекет кассине укçа-тенкĕ хуни ÿссе пынинчен те аван курма пулать. Шупашкарта 1936 çулта перекет кассинче кашни вкладчик пуçне вăтамран 227 тенкĕ пулнă пулсан, 1938 çулта вăл хисеп икĕ хут ÿсрĕ—449 тенкĕ çитрĕ. Çак тĕслĕхсем вĕсем хушшинче зайом сарма лайăх условисем пуррине кăтартса пара ççĕ. Анчах хăшпĕр организацисенче çав майсемпе усă курма тăрăшмаççĕ.

Зайом сарассин ăнаçлăхĕ—зайом тытакансем хушшинче йалан ĕçлесе пынинчен нумай килет. Чылай организацисенче зайом сарнă хыççăнах зайом тытакансем çинчен манаççĕ. Кун пирки уйрăмăнах комсодсемпе бухгалтерисене асăрхаттармалла. Бухгалтĕрсен зайом укçине тĕрĕс пухса, вăл укçана перекет кассине вăхăтра куçарса пырас пулать. Уйрăм организацисенче тата учрежденисенче çакна тивĕçлипех хакламаççĕ, тепĕр чухне зайомшăн укçа перекет кассине „чухăмăн" куçараççĕ. Акă, иртнĕ çулта Оборонă зайомĕшĕн укçа „чухăмăн" куçарса хатланнипе Маслопром 87 тенкĕ, Деткомиçси 192 тенкĕ, Осоавиахим Тĕп совечĕ 333 тенкĕ, Аероклуб 341 тенкĕ перекет кассине укçа ытлашши куçарса панă. Çавăн пек укçа ытлашши куçарни тата ытти организацисен те пулнă. Кун пек çитменлĕхсенчен пачах хăтăлас пулать. Зайом укçине çителĕклĕ куçарманни те, ытлашши куçарни те—финанс дисциплинине, йĕркине пăсни пулать. Комсодсен бухгалтерисем зайом укçине тĕрĕс пухса пынине, вăл укçана перекет кассине тĕрĕс куçарнине тăтăшах тĕрĕслесе пырас пулать.

Й. Филиппăв.

Уполномоченнăйсем лайăх ĕçлеççĕ

Аслă-Чак (Вăрмар р.) йалсоветне кĕрекен йалсенче Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайомне пысăк хавасламхпа çырăнаççĕ. Йалсоветĕнчи служащисем пурте пĕр уйăхра илекен ĕç укçи чухлĕ çырăнчĕç.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем ийулĕн 5-мĕшне 2.650 тенкĕлĕх çырăннă, 300 тенкĕ укçа тÿленĕ. Вăл шутран Н. Немцĕв, А. Çтепанăв колхозниксем 50-шар тенкĕ тÿлесе татрĕç.

Çавăн пекех „Ударник" тата „Атнаш" колхозсенчи колхозниксем 1.210 тенкĕлĕх çырăннă.

Йалсоветри комсомолецсемпе зайом уполномоченнăйĕсем çĕнĕ зайома çырăнтарас тата зайомшăн укçа пухас ĕçре лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем зайом çинчен ĕççыннисене лайăх ăнлантарса параççĕ. Çакна май зайом илме çырăнассипе укçа пухасси сарăлсах пырать.

В. Андрийанăв.

Зайом укçи пухас тĕлĕшпе ăмăртăва тухрĕç

Мăн Сĕнтĕр (Тутаркас р.) йалсоветĕнче пилĕк кун хушшинче 12 500 тенкĕлĕх зайом çыранчĕç.

Чкалăв йачĕпе тăранан колхозра 3.100 тенкĕлĕх çырăннă.

„Ударник" колхозра 905 тенкĕлĕх çырăнса ийулĕн 6-мĕшĕнчех 600 тенкĕ укçа тÿлерĕç. Кунта А. Бачкарйова йулташпа Й. Воробйова йулташ 150 тенкĕшерлĕх çырăнса укçине тÿлесе татрĕç.

Йалсовечĕпе пайанхи куна 1300 тенкĕ зайом укçи пухрĕç. „Ударник" колхоз зайом укçине сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пухса пĕтерме пулса „Новый путь" колхоза социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Орехăв.

Утă çулнă çĕрте

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсем халĕ халăх хушшинче зайом çинчен ăнлантарас ĕçе вăйлатса пыраççĕ.

Пальтăк йалĕнчи агитатăрсем ийулĕн 6-мĕшĕнче утă çулакан колхозниксем хушшинче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом çинчен ăнлантарчĕç. Колхозниксем çĕнĕ зайом кăларнине ырласа утă çулнă çĕртех 6 350 тенкĕлĕх зайом çырăнчĕç.

Агитатăрсем утă çулнă çĕрте „Колхозник" йатлă стена хаçачĕ кăларчĕç.

А. Максимăв.

ТРАК. „Пчелка" тата „Правда" колхоз членĕсем çĕнĕ зайома 2.080 тенкĕлĕх, «Буйга» колхоз членĕсем 1.100 тенкĕлĕх çырăннă. Ийулĕн 9-мĕшне «Буйга» колхозра çĕнĕ зайомшăн 275 тенкĕ укçа пухрĕç. Зайом укçи пухас ĕç вăйлансах пырать.

Михайлăв.

В. И. Ленин йачĕпе тăракан Çар-Политикă Академийĕн тинĕс факультетĕнче вĕренекенсем—Расскин, Золин, Хмельнов, Ромашев, Носов, Кольчук тата Панченко йулташсем шлюпкă çинче Мускав—Севастополь маршрутпа похода тухнă. Вĕсем кĕске вăхăтра 4.100 километр каймалла.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Похода кайнисем çула тухас умĕн, Мускав—Атăл каналĕн Химкинский водохранилищинче.

С. Лоскутов фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото) „Прессклише".

Вăйлă тырпула кĕске срукра, пĕр тăкаксăр пухса кĕрер!

Кулътурăлă-массăлă ĕçе уй-хирте туса пымала

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ 1938 çулхи апрелĕн 9 мĕшĕнче „Çуракинчи тата тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтри йалти партилĕ-массăлă ĕç çинчен" йышăннă постановленире çуллахи вăхăтра кулътурăлă-массăлă ĕçе мĕнле туса пымалине тĕплĕн кăтартса пачĕ. Вал постановленире:

„...Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра партилĕ-массăлă ĕçĕн центрне уй-хире куçарса, çав вăхăтрах йала тата колхоз анкартисене йулакан колхоз членĕсем хушшинчи, çавăн пекех тата йединоличниксем хушшинчи ĕçе те вайсăрлатмала мар. Колхоз клубĕсенче, вулав çурчĕсемпе хĕрлĕ кĕтессенче кулътурăлă-массăлă ĕçе вайлăн сармала, çак ĕçе районти тата йалсевчи мĕн пур кулътурăлă вайа йавăçтармала, вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем çук çĕрте ССР Союзĕн Верхов ай Совĕтне суйланă вăхăтри вунă килсем тата çирĕм килсем тăрăх ĕçленĕ агитатăрсен ĕç опычĕпе пысăккăн усă курмала, ку опыт пĕтĕмпех вырнаçулă пулни курăнчĕ"—тенĕ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май кулътурăлă-массăлă ĕç анлăн саралчĕ. Чылай вулав çурчĕсем çумĕнчи кружоксем тăтăшах йĕркелĕн ĕçлесе пычĕç. Калаçусем, докладсем, лекцисем нумай иртернĕ. Политикăлă-массăлă ĕçе анлăн сарнине пула халăхăн политикăлă активлăхĕ тата производствăри активлăхĕ ÿссех пычĕ. Çак ÿсĕме вайсăрлатмала мар. Çакна тума суйлав кампанинчи пысăк опытпа анлăн усă курас пулаť.

Суйлавсенче халăхăн активлăхĕ пысăк пулчĕ. Суйлав кунне савăнăçлăн ирттерчĕç. Суйлав участкисен центрĕсем—халăх савăнăçне, хавасланăхне, партипе правительствăна парăннине пит уççăн кăтартса паракан центрсем пулчĕç. Çамрăксем кунĕпех савăнчĕç: ташларĕç, йурларĕç тата ыт. те. Суйлав кунĕнче, сăмахран,Ункăçумĕнчи (Трак районĕ) ватă çын Йефим Федăрăв, 69 çулхискер, суйлав пунктне пырсан: „Епĕ пайан хавасланса савăнатăп, пайан чăн-чăн аслă праçник. Тавтапуç Сталин йулташа пуйан та кулътурăлă, савăнăçлă пурнăçшăн", тесе калань. Пур суйлав участкисенче те хаваслăх, савăнăç пулнă. Çав хаваслăх халăх массине çĕнĕ çĕнтерÿсем тума çĕклентерчĕ. Колхозниксем уй-хирте, улахра, анкартинче хĕрÿлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсен канăвне организацилес пулаť. Кану вăхăтне кулътурăлă ирттерме вулав çурчĕсемпе клубсенче ĕçлекенсен, вулавçăсен, агитатăрсен пулăшмала.

Чылай çĕрте ута çулнă вăхăтра колхозниксем хушшинче кулътурăлă-массăлă ĕçе лайăх организациленĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Пантăкра вулав çурчĕн пуçлăхĕ Каденкин Дмитрий кулътурăлă-массăлă ĕçе лайăх организацилесе пыраť. Ута çулна вăхăтра вăл йалти кулътурăлă вайа организацилесе улаха кайнă. Улăхра пурте пулнă: радио, патефон, купăспа, кĕслепе, скрипкăпа, гитарăпа выляканçем тата ыттисем те. Колхозниксем канна вăхăтра савăннă, докладсем итленĕ, политикăлă калаçусем те пулнă. Каденкин йулташах суйлав кампани вăхăтĕнче те пит тăрăшса кулътурăлă-массăлă ĕçе организациленĕ.

Паллах ĕнтĕ, кунашкал примерсем татах пур. Ĕçĕн лайăх опычĕсем пирĕн нумай. Çав опытсемпе усă курса, кулътурăлă-массăлă ĕçе тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра та вăйлăн туса пымала. Кашни бригадăра, кашни звенора колхозниксен канăвне савăнăçлă ирттермеле тăвас пулаť. Çав вăхăтрах анкартинче, строительствăра ĕçĕнче ĕçлекенсем, киле йулакан ватă старииксемпе ватă хĕрарăмсем хушшинче те кулътурăлă-массăлă ĕçе организацилемеле. Кашни гражданин партипе правительствăн решенисене, пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинчи лару-тăрăва, хамăр çĕршыври лару-тăрăва пĕлсе тăтăр.

П. Дубровин.

Хамăрпа ăмăртакан республикăри колхозсенче мĕн куртăмăр

Çак кунсенче епĕр хамăр республикăпа ăмăртакан Тутар республикине кайса, ăмăрту договăрне колхозсенче мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе килтĕмĕр.

Епĕр Бугулъма тата Акташ районĕсенче пурĕ 4 колхозра тата МТС-че, совхозсенче пултăмăр. Мĕн куртăмăр-ха хамăр пулнă вырăнсенче?

Калас пулаť, хăшпĕр колхозсенче тырпула уйран пухса кĕме хатĕрленесси çителĕксĕртерех пыраť. МТС-сем йалхуçалăх машинисене пурне те йусаса пĕтереймен, хăшпĕр трактăрсен пайĕсем çук. Тырă хумали ампарсем хатĕр мар. Акă, Сокольски МТС-ра 16 молотилкăран 10 çеç хатĕр. МТС комбайнсене лайăх йусаса хатĕрленĕ, хăшпĕр пайсене рационализатăрла сĕнÿсем тăрăх улăштарнă. Кашни комбайнăн сывлăш тăпри, бак пур, автоматлă масльонкăсем тунă. Кунсăр пуçне тата касакан аппаратăн штун пуçĕнче йăвăç вырăнне роликлă подшипник лартса тухнă. Çапла туни ĕçе хăвăрт тума пулăшаť.

Епĕр пулнă колхоз уйхирĕсенче тырăсем вăйлă ÿсеççĕ, уйрăмăнах ыраш пит паха. Чылай колхозсем тырă вырнă вăхăтра пĕрлешÿлĕ столовăйсем организацилеççĕ, кирлĕ продуктăсене хатĕрлеççĕ.

Тутар республикĕнче пулни пире пысăк усă пачĕ. Чылай ĕçсем йĕнĕпе пирĕн вĕсенчен пример илсе ĕçлемеле. Кашни колхозра, бригадăра, звенора социалисăмлă ăмăртупа стахăнăвла йухăма анлăн сарса, вăйлă тырпула лайăх пухса илмеле.

Шăнкăртам районĕнчи „Ударник" колхоз председателĕ—Шарифзйан Алейĕв.

Патăрйел МТС трактăриссен бригадирĕ—Дмитрий Земцов.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç

Пучахлă тырăсене 6.567.000 гектар вырнă.

Ийулĕн 10-мĕшне Сойуз тăрăх пучахлă тырăсене 6.567.000 гектар вырнă,—вăл плана 7 процент тултарни пулаť. Комбайнсемпе вырас плана МТС-м 9 процент тултарнă, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсенче—7 процент тултарнă.

Иртнĕ çулта çак вăхăта 7.300.000 гектар вырнă.

Украинăри Совхозсен Халăх Комиссариачĕн çистеминчи совхозĕсенче вырса пуçтарнă тырă çаккăна кăтартса панă: унта тырă иртнĕ çулхинчен 24 процент чухлĕ лайăхрах пулнă. Сталинск облаçĕнче нумай колхозсем гектартан 20-шер центнĕр пухса илеççĕ.

(ТАСС).

Вырма тухнă колхозсем йышлансах пыраççĕ

ЙЕЛЧĔК (телефон тăрăх). Патрекеленчи „Осоавиахим" колхоз 2-мĕш кун ĕнтĕ тырă выраť. Колхозра 2-мĕш бригадă ытти бригадăсенчен пĕр кун малтан тухса, пĕр кун хушшинче 12 гектар вырнă. Вырнă хысçăнах çĕмел туса пыраççĕ. Кăçал пĕтĕм тырра машинăпа вырса кĕртеççĕ: вĕсен 5 жнейкă, 1 лобогрейкă. Колхозсем малтанхи кунах пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Ийулĕн 13-мĕшĕнче (çур кун хушшинче) Каринкинă Марийа 265 кĕлте, Феклă Блиновă—350 кĕлте, Зотикăвпа Александра Зотикăвă йулташсем 317-шер кĕлте, Доброхотăвă 280 кĕлте сыхнă.

Жнейкă çинче ĕçлекен Леонид Маркăвпа Александр Захарăв ийулĕн 14-мĕшĕнче, 5-шер гектар вырчĕç.

Бригадăсенче стена хаçачĕ тухаť. Клавдийă Можайĕвă агитатăр кулътурăлă-массăлă ĕçе уйа куçарнă.

Районĕпе 10 колхоз ийулĕн 14-мĕшĕнче пулса çитнĕ вырăнсенчи ыраша суйласа вырма тухрĕç.

Тр. Майорăв.

Малтанхи кунсенчи çитменлĕхсем

ПАТĂРЙЕЛ (телефон тăрăх). Йăлăм йалĕнчи „Хĕрлĕ Патăрйел" колхоз тырпулсене пухса кĕме ик-виç кун кайа йулса тухрĕ. Ыраш уйĕсем талкăшпех пулса çитнĕ. Апла пулсан та лайăх писсе çитнĕ тырра хăвăрт тата кĕске срукра пухса кĕрессишĕн нимĕнле кĕрешÿ те çук-ха. Колхозăн 4 жнейкă, вĕсенчен малтанхи кун 2 жнейкă çеç уйа тухнă, 2-шĕ йусавлă мар пирки вырма тухайман.

Уйа тухнă жнейкăсем патĕнче çмена улăштармали çынсем çитмеççĕ, кĕлте çыхакансем çыхса пĕтермесĕрех киле кĕрсе пĕтнĕ. Жнейкăпа вырнă тырра çыхмасăрах уйа хăварнă. Тăкаксемпе кĕрешес ĕçе организацилемен. 1-мĕш бригадăра, Соловйов машинист участкинче, кашни тăваткал метрта 50 пучах йулса пыраť. 2-мĕш бригадăри машинист Фролов Иван участки çинче те çавнашкалах.

Витнĕ итемсем хатĕр мар, вĕсене пайан тин тума тытăннă. Колхоз председателĕ Рубцов ĕçе организацилес вырăнне ĕçсе çÿреť. Колхозра ĕç планне те туса хатĕрлемен.

Пушкин.

Ăмăртса ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. Чуралькассинчи промысла ертелĕнчи рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пыраť. Ăмăртса ĕçлекенсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Иван Косарĕв йулташ Михаил Коротков йулташпа ăмăртса ĕçлеť. Ийуньă уйăхĕнче вĕсен 600-шер штук чăпта çапмала пулнă. Косарĕв йулташ 725 штук çапнă. 66 çулхи Васçилий Йакимăв та ăмăртса ĕçлеť. Вăл йулашки икĕ уйăхра 310 штук чăпта çапрĕ.

Ертелте ăмăртса ĕçлекенсен хисепĕ ÿссех пыраť. Халĕ III-мĕш квартăлта тата лайăхрах ĕçлеме ăмăрту договăрĕсем сыраççĕ.

Ив. Çеменăв.

Николайĕври савăтра тунă ишекен дока 1938 çулти ийунĕн 21-мĕшĕнче Петропавлăвскри Камчатка илсе çитернĕ. Док Одессăран мартăн 30-мĕшĕнче тухнă, ăна „Харьков" тата „Тайфун" пăрахутсем туртса пынă. Пăрахутсем 11-пин тинĕс милĕне 82 кун хушшинче—задани панă срукран 20 кун малтан тухнă.

Вĕрçĕнĕ техникălă док Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн пулă тытакан тата транспăрт флотне ремонт тумала пулаť.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): Ишекен док капитанĕ И. О. Ваврупенко, ишеве хатĕрленнĕ чухне йĕртсе пынă капитан А. И. Пузанков, ишеври флагштурманĕ—„Тайфун" капитанĕ А. К. Федерман.

Й. Аврутин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото) „Прессклише".

Кружоксен ĕçĕсем йапăхса кайнă

(Шупашкарти макарон хапрăкĕ)

Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ панă план тăрăх кăçалхи çул макарон хапракĕнче техникăна вĕренмели кружоксенчен 50 çынна вĕрентсе калармала. Ку ĕçе анăçлăн туса пыма хапрăкра условисем пур. Вĕренÿ хатĕрĕсем, преподавательсем тата укçа-тенкĕ çителĕклĕ. Анчах хапрăкăн тата профсойуз организацин руководителĕсем ĕç çине сÿреккĕн пăхнă пирки пайанхи куна техникăна вĕренесси йулса пыракан ĕçсенчен пĕрийĕ шутланаť.

Хапрăкра вĕренĕве 45 çынна йавăçтарнă. Виçĕ кружок ĕçлемелле. Заньатисем йĕркелĕ пулса пынă пулсан, вĕренĕве йавăçтарнисене пурне те вĕрентсе каларма май пулнă. Анчах ĕç пачах урăхла. Кружоксем, хĕллехи вăхăтра виçшер заньати туса ирттернĕренпе урăх пĕр заньати те ирттермен. Виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ кружоксем пачах ĕçлемеççĕ.

Техникăна вĕренес ĕç начар пынине пĕр çын çине кăна йавантарма çук. Ку ĕçшĕн дирекци те, профсойузпа комсомол тата парти организацисем те айăплă. Вĕсем ĕç начар пынине кураççĕ пулин те пĕр пĕрин çине шанса ним тумасăр лараççĕ. Акă, кăçал нихăш организаци те техникăна вĕренессине вăйлатасси çинчен уйрăм ыйту лартса сÿтсе-йавман, пĕрлешÿлĕ пухусемпе канашлусем те туса ирттермен. Йаланах ыйтăва „пĕтĕмĕшпе" калаçнипе ирттерсе йараççĕ. Ĕçре çирĕп йĕрке, дисциплинă çук. Профсойуз организацийĕ (хапрăк комитечĕн председателĕ Бльудецов) рабочисене заньати пуçланас умĕн каласа çÿренипе ĕç пулнă тесе шутлаť иккен. Ку пачах тĕрĕс мар, массăпа ĕçлемесĕр ĕçе анăçлăн пурнăçа кĕртме май çук.

Техникăна вĕренесси промфинплана йаланах анăçлăн тултарса пымала тăвас условисенчен пĕрийĕ пулса тăраť. Техникăна пĕлмесен лайăх пахалăхлă продукци туса кăларма çук. Хапрăкри тĕслĕхсенчен те ку лайăх курăнаť. Хапрăк уйăхран уйăха плана тултарса пырайманť, ийунь уйăх планне те тултараймарĕ. Стахановла йухăма, социалисăмлă ăмăртăва йапăх сарса пынине те палăртмала. Çак йулашки 5-6 уйăх хушшинче стахановецсен ретне 2-3 çын çех хутшăннă. Çапла ÿссе пынăран та ĕнтĕ пайанхи куна хапрăкра ĕçлекенсенчен стахановецсен хисепĕ 12 процентран иртмест.

Рационализаципе изобретательствă ĕçĕ кунта пачах çук. Кăçал пĕр сĕнÿ те пулман. Мĕншĕн тесен ку ĕçе дирекци те, профсойуз организатци те туса пыман. Хапрăк директăрĕ Данилăв йаланах „вăхăт çукки" çине йавантараť. Ун патне темĕн чул кирлĕ ыйтупа пырсан та вăл „манăн вăхăт çук, кайран килĕр" тенисĕр пуçне урăх нимĕнле ответ та памасť.

Ĕçре йаланах хастарлăх, конкретлăх кирлĕ. Руководительсен массăна организацилеме пĕлмеле, тĕрĕс йĕртсе пымала. Анчах макарон хапрăкĕнче вĕсем курăнмаççĕ. Кунта ответсăрлăхпа пĕр пĕрин çине йавантарасси пуç пулса тăнă. Çаксене пĕтермеле.

Хар. Лиçин.

Йулашки почтăран

Мухтав йурри йурлакансем

Хĕрлĕ Чутай районĕнче мĕнле те пулин паллă ĕç пулса иртсенех, „Çĕнтерÿ çулĕ" хаçатăн çитĕнÿсемпе пуç çавăрăнма тытăнаť. Хаçат парти райкомĕн руководствиумĕнче мухтав йуррине йурлама пуçлаť. Ун пек чухне вара хаçатри умстатйасенче „парти райкомĕн революцилĕ сыхлăхĕ лайăх касакан бритвă пек, çак çитĕнÿсене парти райкомĕ йертсе пынипе анчах тунă" сăмахсем, парти райкомĕн руководствине мухтанисем туллийех пулаççĕ.

Çаксем çинчен „Çĕнтерÿ çулĕ" хаçата асăрхаттарнăччĕ. Анчах хаçат редакцийĕ хайне çавăн пек кăтартса панине нимĕн вырăнне те хумасť пулмала. Ийулĕн 10-мĕшĕнче тухнă 57-мĕш номĕрте каллех райком руководстви умĕнче барабан çапса çĕнтерÿ йуррине йурлаť.

Хаçат парти райкомĕн руководстви умĕнче мухтав йурри йурлакан районта ĕçсем мĕнле тараççĕ-ха? Суйлав пулнăранпа вăхăт нумай иртмен. Ишеккассинче, Штанашра, Упукушкĕнче, Турханта агитацилĕ массăлă ĕç чарăнса ларнă. Суйлав вăхăтĕнче ĕçленĕ агитатăрсен коллективĕсем саланса кайнă. Ку ĕнтĕ парти райкомĕ йертсе пынипе тунă ылттăн фонд райком йертсе пыманнипе саланса кайни çинчен калаť.

„Çĕнтерÿ çулĕ" райком ĕçĕнчи, партин пуçламĕш организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклеме именекенскер, политикăлă-агитацилĕ массăлă ĕç вайсăрланнăшăн райком мар, пуçламĕш парторганизацисем мар, йалсоветсем тата вĕсен çумĕнчи секцисем айăплă, тесе шутлаť. Хаçантанпа вара политикălă агитаципе пропагандă ĕçне парторганизацисен аллинчен илнĕ?

Йулашкинчен тепĕр факт. Хĕрлĕ Чутай районĕнче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома сарас ĕç начар пыраť. Пĕтĕм рабочисемпе служăщисенчен 73 процентĕ çеç çĕнĕ зайома илме сырăннă. Колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче зайом сарас ĕç пушшех те начар пыраť. Çак факт та ĕнтĕ агитацилĕ-массăлă ĕç районта начар тăнине кăтартса параť.

Мухтанса, çитĕнÿсемпе пуçа çавăрса, райком умĕнче йурласа тăмала мар, районта ĕçсем чăннипе мĕнле тăни çине большевикла пăхса, парторганизаци умне конкретлă задачăсем кăларса тăратмала.

Пире çакă та тĕлĕнтерет: „Çĕнтерÿ çулĕ" райкома пĕрмайах мухтани çинчен малтанхи сигнал пирки те Хĕрлĕ Чутай райкомĕ нимĕнле ответ те памарĕ. Апла пулсан, мухтанас йăла райкомран тухмасť-ши?

Ухсай Йаккăвĕ

Халăхсен туслăхĕ

I.

Пăрахут шунă чух, Атăл çине ÿкнĕ уйăх вана-вана чĕтрет. Çуллахи ăшă çил кăмăла кантарса вĕрет. Çÿлти балкон çинче Иваньук мучи Атăл хĕрринчи вăрмансем çине пĕр майах пăхса канăçсăр çÿрет, хăй тĕллĕнех „урамăрсем аслă, çуртăр хулăн" тесе йурлакалаť. Вăл Горький хулинчен таврăнаť, хăйĕн ывăлĕ патĕнче хăнара пулнă иккен. Вăл çитмĕл çула çитнĕ çын, унăн çÿçĕ çĕмĕрт çеçки пек шурă. Иваньук мучи çамрăк чухне теветкел пулнă, ун пек çынсене хавăх хушшинче чăпар чĕрелĕ теççĕ, йун вылят теççĕ. Аксу таврашĕнче çĕр хĕсĕк пирки Иваньук мучи Пушкăрт хирĕсене тухса кайнă, анчах йĕнчĕкре укçи йанăрамаи, çавăнпа Ахмет-Аксаккал бай патĕнче кĕтÿ кĕтме тÿрĕ килнĕ. Пушкăрт йейлевĕсенче кĕтÿ кĕтесси йăвăр пулнă, виçшер уйăх таран йала пĕр таврăнмасăрах уйхирте çÿренĕ. Иваньук пĕр маттур тутар йĕкĕчĕпе—Минийгалейпе пĕрле ĕçленĕ, вĕсен хушшинче пысăк туслăх пулнă, çĕрле тĕсдта çитиччен çутăлакан вучах умĕнче йĕкки йăракан калаçусем пулса иртнĕ. Минигалей пушкăрт халăхĕн паттăр ывăлĕ Салават çинчен, вăл вырăс халăхĕн паттăр ывăлĕпе Пугачов Йемельйанпа пĕр кăмăллă пулса, алла-аллăн тăрса патша йĕркине хирĕç кĕрешни çинчен каланă, мулла сурăх утланса рейе йăлй çинчен калакан ексипетсем — йумахсем йанă. Туслăх—пĕр пĕриншĕн кăкăрпа тăни, йăвăр вăхăтра хута кĕни, йÿп курни пулаť. Ахмет-Аксаккал байăн пурнăç йăлисем ытла та тискер пулнă, вăл ĕçсе ÿсĕрĕлсен çынна хĕнеме йуратнă. Пĕрре кĕркунне Ахмет ĕçсе ÿсĕрĕлнĕ, Минигалей килкартинче кантра йавса ларнă. Ахметъ пĕр сăлтавсăрах, хăйĕн мăнтăрлăхне тÿсеймен пирки Минигалейе хăлха чиккинчен çатлаттарма тытăннă. Минигалей вăйлă çын пулнă, çĕр çинчен сакăр пăта йăтса илсе кайма пултарнă. Минигалей Ахмет бай çынна хĕнесе йăпану курас теннне хăй майлă пăхнă, тĕреклĕ те вăйлă аллипе пенĕ те Ахмет-Аксаккал бай пĕр кунтах „леш тĕнчене" ăсаннă. Йалти байсем Минигалейе сут тунă, ури тупавĕсенчен хăмасемпе çапнă, çĕр алтса мăйĕ таранах пасар урамне лартнă. Мул пулнă пирки асса кайнă байсем шăлйĕрме йуратнă, Минигалей çине сура-сура иртнĕ.

Хăйĕн йулташне çĕр ăшĕнчен кăларса илесси, хĕн-хуртан хăтарасси Иваньука çĕр çывăрма та паман. Иваньук Минигалейе çурçĕр иртсен кĕреçепе чавса илнĕ те вара лаша утланса çеçен хирĕ тарнă. Минигалей нÿрлĕ çĕрте тăнă хыççăн йăвăр чире кайнă, тара ÿксе вилнĕ. Иваньук темĕн кураксем пухса вĕретнĕ, пĕр уйăхра çеçен хирте Минигалейпе пурăннă, ăна чĕртнĕ. Вара вĕсем Урал савăчĕсенче ĕçленĕ, вĕсен туслăхĕ халиччĕнех йулнă...

Иваньук мучи ватă çын, анчах шурă çÿçпе витĕннĕ пуçра çамрăк шухăш выляť тата нумайрах пурăнасси, пирĕн самана илемне курасси ĕмĕтне ÿстерет. Ĕлĕк йалти ватăсем чăсрах вилме хатĕрленсе йурийех тупăксем хатĕрленĕ. Иваньук мучи Горький хулинче, ывăлĕ патĕнче хăнара чухне пысăк тухтăрсем патне кĕнĕ. Вăл çапла каласа параť:

— Кăçал Минигалей тусăм патĕнче хăнара пултăм. Икĕ ывăл унăн. Пĕри льотчик, тепри—счетовод. Минигалей пĕр вăхăтра хырăм чирĕпе чирленĕ те вилессен хăраса ÿкнĕ, вара тÿрех Кийĕв хулине, льотчик пулса ĕçлекен ывăлĕ патне кайнă, чирĕнчен тÿрленнĕ. Минигалей пирĕн колхозра пулчĕ, епĕ вĕсен колхозĕнче пултăм. Минигалейĕн ĕлĕк пурăнма çурчĕ те пулман, халĕ шурă тăмпа сĕрнĕ темĕн пысăккăш çурт. Кун пек лайăх пурнăçра ытларах пурăнас килет.

Иваньук мучи сăмахĕнче—тĕрĕслĕх. Вĕсем Минигалейпе иккĕшĕ те ылханлă патша саманинче йăвăр пурнăç тÿснĕ, халĕ телейлĕ пурнăçра нумай çулсем пурăнасшăн. Епĕр Тутар республикине социалисăмлă ăмăрту договăрне тĕрĕслеме кайни çинчен пĕлсен, Иваньук мучи мана Чистай районне, Вахитăв йăчĕпе тăракан колхоза, Минигалей патне кĕма сĕнчĕ.

II

Чăваш республикĕн делегацине Хусанта питĕ кăмăллăн кĕтсе илчĕç, тутар халăхĕн чи лайăх çыннисем пирĕнпе алă тытса хăйсен республикин ÿсĕмĕсем çинчен каласа пачĕç. Социалисăмлă ăмăрту договăрне тĕрĕслесси пĕрне-пĕри пулăшассинче тăраť, çавăнпа пирĕн делегаци питĕ пысăк кăмăлпа ĕçлеме тытăнчĕ, май килнĕ таран нумайрах районсенче пулас шухăшпа 5 бригадăна уйрăлчĕ.

Сийен-бике минарĕ çинчен пĕтĕм Хусан хули таврашĕ алă тупанĕ çинчи пек курăнаť, тăçта айакра Атăл кăвакараť, хирсем хумханни сисĕнет. Делегаци членĕ—Чăваш республикĕн чаплă трактăрисĕ, орденоносец Иван Александрăв Сийен-бике минарĕ çинчен пăхсанах, тем аса илчĕ пулас.

— Ав ĕнтĕ, манăн Вăрмар çавăнтала,—терĕ тĕтреленсе курăнакан Атăл йеннеле кăтартса.

Епĕр ийулĕн 2-мĕшĕнче Тутар республикĕн районĕсене тухса кайрăмăр. Çăмăл машинă шоссе тăрăх хăвăрттăн вĕçет. Çула йĕркелес тĕлĕшпе тутар халăхĕ питĕ хастартă ĕçлеме тытăнни сисĕнет. Чистай патне çитиччĕнех çулйĕр бригадисем час-часах тĕл пулаççĕ. Хĕнел сутти айĕнче йалкăшакан Камă шывĕ тĕл пулаť. Алексеевски район çĕрĕсем пуçланаççĕ. Хăйма пек сĕткенлĕ, мамăк тÿшек пек çемçе çĕрсем. Ку çĕрсем Камă хĕрринчи нÿрлĕхпе пуйан. Хура тăпра тырра ÿстерме ытла та пултарулă пулнипе мухтанă пек вырттаť.

Чистай райĕçтăвком председателĕ Залалăв йулташ пире тĕплĕнех район хыпар-хăнарĕсемпе паллаштараť. Чистай районĕ Тутарстанри чи пысăк та пуйан районсенчен пĕри, хăйĕн территорийĕпе хĕвелтухăçĕнчи пĕр-пĕр пĕчĕк патшалăхпа танлашма пултараť. Чистай хули Камă хĕрринчи хуласен чăпĕ. Каçхине тĕлĕнмеле сарă уйăх айĕнче Чистай сăрчĕ çинчен Камă çинче çăлтăрсем тата електрицă ламписен çуттисем выляннине пăхсан, кашни етеммĕнех сăвă çырма кăмăл çуралĕ. Райĕçтăвком председателĕ Залалăв йулташ районра мĕн пурĕ те 7 уйăх çеç ĕçлет пулсан та районти 73 колхоза, ăçта мĕн пулнине тата мĕн тумалине пĕлсе тăраť. Епĕр унпа Камă хĕрринче нумайччен Буденнăй, Çĕпрел, Чистай районĕсем çинчен калаçса тăтăмăр.

Тепĕр кун ирхине епĕр Мусльумкинри машинпа трактăр станцинче пултăмăр. Вăл кăçал тин ĕçлеме пуçланă, халь çеç „Коммунар" савăт конвейĕрĕнчех вĕрçĕнĕ 9 комбайн килнĕ тата 7 килмеле. Çĕнĕ станци, çĕнĕ çынсем, çавăнпа Камă таврашĕнчи сĕткенлĕ те пуйан хура тăпра çинче çĕлĕк пăрахсан—çĕлĕк путас çук тырăсене пуçтарма питĕ хăвăрт хатĕрленме тÿрĕ килет. Çамрăк та патвар комбайнерсемпе штурвалçăсем комбайнсем умĕнче тĕрмешеççĕ, вĕсем кăçал хăйсен машинисемпе 4800 гектар тырă пухса илмеле. Комбайнер Шафик Хуснуллин пĕлтĕр 525 гектар тырра пухнă, вăл кăçал 700 гектар пухса илме сăмах панă. Хуснуллин хăйĕн сăмахне чăн чăнах пурнăçа кĕртес тесе пĕтĕм кăмăлĕнчен çунаť, халĕ „Магариф" колхоз хирĕсене пăхса тухасшăн.

— Комбайнпа питĕ анăçлă ĕçлес тесен, хирти пур лапкашкасене те пĕлни кирлĕ,—терĕ Хуснуллин йулташ.

Хуснуллин пĕлтĕр ĕçленĕ чухне Чистайри машинпа трактăр станцинче чăкалтăшрах пулнă, мĕншĕн тесен пĕр колхоз хирĕçчен тепĕр колхоз хирне час-часах куçса çÿремеле килни ĕç анăçлăхне пит те чарса пынă. Кăçал Мусльумкинри МТС-ра ĕçлекенсем кашни комбайнах пысăк участкăсем çирĕплетсе пама тата комбайнсем таврашĕнче ĕçлекен колхозниксене комбайнерсемпе штурвалçăсемпе сывăх паллаштарма тăрăшаççĕ. МТС директăрĕ Сафин йулташ кун пирки çапла каласа параť:

— Пирĕн çулйĕрсем мухтанмала мар, анчах çĕр лаптăкĕсем çиппе туртнă пек тикĕс, комбайнсене вĕчĕк участкăсем парас пулсан, вĕсене пирĕн усалтарах çулсем тăрăх час-часах куçарса çÿреки ĕç йĕркине питĕ чарса пыраť.

Сафин йулташ темиçе çул хушши колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ, халĕ унăн ĕçĕ, ĕлĕкхипе танлаштарсан питĕ аслăланнă. 39 колхоз МТС участкине кĕрет, вĕсем кашнийех МТС сыннисенчен пулăшу ыйтаççĕ, телефон йантравĕсем пĕр вĕççĕр сăрлаттаты те ну-ай хăвартлăхсем çинчен хыпар хăвар пĕлтерет. МТС дирекцинчен пĕр утмăл хăлаç кайсан „Ударник" колхоз правленийĕн, хĕлĕн-çăвĕн йĕпе сапа айĕнче машинсем тутăхса ларнă. Колхоз тырри-пуллине пухса кĕртме хатĕрленес пирки чылай кайа йулнă, анчах çав вăхăтра пĕтĕм совхоз халăхĕ пур вăйхалне парса ĕçе тытăнни сăвăнтараť. Пилĕке тытса каппайчăкла утса çÿрекен çынсене курма çук. Пĕр ерне кайăрах колхоз производствин калĕ-малăх пыçне тайкаласа çÿрекен председательсене улăштарнă. Колхоз правленин ĕлĕкхи председателĕ чылай вăхăт пĕтĕм ĕçе йухăтăрса пынă. Пĕр колхозник хĕрĕсен урине йусаса лараť, тарăхса çапла каласа параť:

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Шупашкар хула комитетĕнче

Çак кунсенче ПСК(б)Парти Шупашкар хула комитечĕ пуçламĕш парторганизацисем парти ретне çĕнĕрен членсем илес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен постановлени йышăннă.

ПСК(б)П хула комитечĕ пуçламĕш парторганизацисенче партине илес ĕç мĕнле пынине тĕрĕсленĕ хыççăн çакна палăртат̆: йулашки вăхăтра пуçламĕш парторганизацисем партилĕ-политикăлă ĕçсене чылай лайăхлатнипе парти ретне кĕрекенсен шучĕ те ӳсрĕ, вăйлăланчĕ. Партине çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа 1938 ç. йанвар уйăхĕ тĕлне парти кандидатне 12 çын илнĕ, кандидатран члена 23 çын куçарнă, кăçалхи йанвартен пуçласа ийуђ уйăхĕн пĕрремĕш тĕлне (ултă уйăх хушшинче) парти кандидатне 58 çын илнĕ, кандидатран члена 40 çын куçарнă.

Анчах Шупашкар хулинчи пуçламĕш парторганизацисем ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ парти ретне çĕнĕрен членсем илесси çинчен 1938 ç. мартăн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленине çителĕклĕ пурнăçласа пымаççĕ, тесе шутлат̆ ПСК(б)Парти хула комитечĕ. Уйрăмăнах, парти ретне пĕрремĕшпе иккĕмĕш категорипе кĕрекенсен шучĕ çителĕксĕр. Чылай пуçламĕш парторганизацисем (Макарон хапрăкĕнчи, Осоавиахимри, Типографири, Чебторгри, Çутĕç Халăх Комиссариатĕнчи т. ыт. те) 1937—1938 çç. парти ретне пĕр çынна та илмен. Çавăн пекех парти кандидатĕнчен члена куçарасси те начар тăрат̆. Чылай пуçламĕш парторганизацисенче (Çутĕç Халăх Комиссариачĕ т. ыт.) парти кандидатĕнче 1926—1927 çултанпа тăракан йулташсем пур.

ПСК(б)П хула комитечĕ пуçламĕш парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1937 ç феврађ-март уйăхĕсенчи тата 1938 ç. йанвар уйăхĕнчи пулса иртнĕ Пленумĕсем катартса хăварнă пек улăштарса çĕнетмен, тесе шутлат̆. Вăл чăнах та çапла иккенĕ нумай парторганизацисем парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе сӳрĕккĕн ĕçлесе пынинчен курăнат̆. Сочувствуйушчисемпе, комсомолецсемпе тата партире тăман активиссемпе ĕçлĕссине калама çук начар организациленĕ. Чылай парторганизацисенче (16-мĕш №-лĕ совхозра, пристăнре, хула совечĕнче, спиртсавăтра т. ыт. те) парти ретне илме ыйтса панă зайавленисене уйăхĕ уйăхĕпе пăхса тухмасăр выртт араççĕ. Партине çĕнĕрен илнĕ кандидатсем партдокументсене вăхăтра илеймеççĕ. Хăшпĕр коммунистсем хăйсем çине ответлăх илесшĕн мар пулса, лайăх пĕлсе тăракан шанчăклă çынсенех парти ретне кĕме рекомендацисем памасăр пăрăнса танисем пулнă.

ПСК(б) I хула комитечĕ çапла йышăннă:

1. Пуçламĕш парторганизацисене партине илес тĕлĕшпе пулса пыракан сӳлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерме хушас. ПСК(б)П хула комитечĕпе пуçламĕш парторганизацисен комсомолецсем партине кĕме рекомендацисем ыйтса панă зайавленисене пăхса тухас ĕçри волокитăна пĕтермеле.

2. Партком секретарĕсемпе парторгсене хăйсен ĕçне ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврађ-март тата йанвар уйăхĕсенчи Пленумĕсем катартса панă тăрăх тĕпренех улăштарса çĕнетмеле. Çав тĕлĕшпе çаксене тумала:

а) ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнче ĕçре ӳссе çитĕннĕ сочувствуйушчисемпе, комсомолецсемпе, партире тăман активиссемпе куллен кун ĕçлесе пымала, вĕсене политикăлă воспитани памала, парти шкулĕсенче вĕрентмеле.

Вĕсене партилĕ порученисем парса, обществăлă-политикăлă ĕçе хутшăнтарса пымала, порученисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемеле;

б) Пуçламĕш парторганизацисен уçă пухӳсем туса, унта сочувствуйушчисене, комсомолецсене тата партире тăман активиссене чĕнмеле.

3. Парти ретне çĕнĕрен илнĕ çынсемпе куллен-кун ĕçлесе пырса, партилĕ ĕçе хутшăнтарса, вĕсене вĕрентсе бођшевикла воспитани парса пымала.

Ĕçри лайăх опытсене пĕр-пĕрне парас тĕлĕшпе партине çĕнĕрен илнĕ çынсен канашлăвне тăтăшах туса ирттермеле, унта рекомендаци паракансем те пулмала.

Ку таранчен хула парторганизацин пурнăçĕ çинчен хаçатсенче çителĕксĕр çутатса пынине астуса, малашне вăл ĕçе тĕпренех çĕнетсе, вăйлатса йамала. Парторганизацисем тата парти хула комитечĕн инструкторĕсем республикăри хаçатсене тата çтена хаçачĕсене парти пурнăçĕ çинчен стат̆йасем, заметкăсем çырса тăмала.

4. Парторганизацисем, пур майпа та бођшевикла сыхăлăха ӳстерсе, пур ĕçре те чăн-чăнах малта пыракан, партипе Совет влаçне пĕтĕм чĕререн парăннă, чи лайăх çынсене—партире тăман бођшевиксене, ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче ӳссе çитĕннĕ çынсене ПСК(б)П ретне суйласа илмеле.

Партине çĕнĕрен илнисене бођшевикла воспитани памала

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра Вăрнар районĕнче çĕршер çын агитатăрсем, доверённăйсем ĕçлесе хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартрĕç. Хаљ ку агитатăрсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома сарас тĕлĕшпе йалсенче активлă ĕçлеççĕ. Суйлав вăхăтĕнче ӳссе çитĕннĕ агитатăрсем, доверённăйсем, округри тата участкăри суйлав комиççи членĕсем пулнисем партине кĕреççĕ.

1937—38 çулсенче 23 çынна партине илнĕ, 15 çынна кандидатран парти членне куçарнă. Ку шутран чылайĕшне 1938 çулта партине илнĕ. Парторганизацисем ПСК(б)П ретне малта пыракан, пĕтĕм хăватпа рабочи класшăн тăракан, рабочисемпе хресченсене тата ĕç интеллигенцине илеççĕ. Суйлав вăхăтĕнче округра суйлав комиççи членĕ пулса ĕçленĕ, МТС-ри трактăр бригадин бригадирне Мишаков йулташа, „Чапайев" колхоз председателĕ, комсомолец Шлыкăв йулташа (вăл та суйлав вăхăтĕнче округри суйлав комиççин секретарĕ пулса ĕçленĕ) парти ретне илнĕ.

Çавăн пекех МТС-ри трактăр бригадин бригадирне Данилăва, райçутĕçпайен инструктăрне Андрейева, райхаçатра ĕçлекен Волкăва, Флегăнтав учителе, Йемелйанав колхознике, Йермошкина йалсовет председателне Виноградăвăна тата ыт. партине илнĕ.

Вăрнар районĕнче 14 пуçламĕш парторганизаци, 3 кандидатсен групли. Ку шутран чылайĕшĕнче, сăмахран, фосфорит савăчĕ, Вăрманпромхоз, Хатĕрлев комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ, вăтам шкул, йалпо, Шљти ĕçсен халăх комиссариачĕн районри уйрăмĕ, Зоотехникумри пуçламĕш парторганизацисенче 1937—1938 çулсенче пĕр çынна та парти ретне илмен.

Кандидатран парти членне куçарас ĕç те çителĕксĕр пырат̆. Районра 62 кандидат. Вĕсенчен чылайĕше 8—10 çул хушши кандидатра тăраççĕ. 1928—29 çултанпа—2, 1930 çултанпа—5, 1931 çултанпа—14, 1932 çултанпа—10 çын кандидатра тăраççĕ. 1938 çулта 4 çынна çеç кандидатран парти членне куçарнă.

Çак фактсем вĕсем парти кандидачĕсемпе ĕçлеменни çинчен калаççĕ. ПСК(б)П райкомĕ отчотпа суйлав пухăвĕсем хыççăн кандидатсене пухса калаçман. Сочувствуйушчисемпе ĕçлесси те çӳле выранта тăмаст̆. 1938 çулта 7 çынна çеç сочувствуйушчисен группине илнĕ. Сочувствуйушчисенречĕ ӳсменни—активпа ĕçлеменнинче. Чылай парторганизацисем суйлав вăхăтĕнче ӳссе çитĕннĕ агитатăрсемпе, доверённăйсемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Районра 37 сочувствуйушчи, вăл шутран çурри 10 çын—МТС-ра тата Колђцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозра 8 çын. Мĕншĕн тесен кунти парторганизацисем сочувствуйушчисемпе, партире тăман активпа куллен ĕçлеççĕ. Вĕсене кружоксенче вĕрентеççĕ, обшчĕствăлă-политикăлă ĕçсене хутшăнтараççĕ. Кашни парторганизацин çакăн пек ĕçлеме тăрăшмала. Парти кандидачĕсене, сочувствуйушчисене, партире тăман активиссене, партине çĕнĕрен илнисене бођшевикла воспитани памала. Пуçламĕш парторганизацисем, ПСК(б)П райкомĕн те вĕсене ĕçре пулăшса пымала.

Агитатăрсемпе йаланах ĕçлемеле

Шăхаљти (Вăрмар р.) пуçламĕш парторганизацинче 4 член, 3 кандидат тата 3 сочувствуйушчи. Весем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхатра тарăшса ĕçлерĕç, партире тăман йулташсене хăйсен тавра организацилесе, суйлава суйлавçăсене 100 проценчĕпех сасăлама хутшăнтарассишĕн тăрăшрĕç.

Суйлав кампанинче 73 агитатăр йал хушшинче вирлĕн ĕçлерĕç. Весем суйлав положенисене ăнлантарса панипе чăрăнса тăман, хаçатсем тăрăх тĕнчери лару-тăру çинчен те, хамăр совет çĕршывĕнчи ĕçсем çинчен те вуласа панă тата ăнлантарнă. Херӳле ĕçлекен агитатăрсем партие членне 1 çын, кандидата кĕме 2 çын, сочувствуйушчине кĕме 3 çын зайавлени панă. Ку йултăшсене партине илме хатĕрленĕ, килес пухура пăхса тухмала.

Епĕр ĕçре палăрнă агитатăрсене саласа йамастпăр, вĕсемпе куллен ĕçлесе, йертсе паратпăр. Агитаци ĕçĕ сӳнсе лармала мар. Хаљ пирĕн агитатăрсем çĕнĕ зайом çинчен колхозниксене лайăх ăнлантарса параççĕ. Пайанхи куна вĕсем ăнлантарнипе 7 000 тенкелĕх зайом сарна. Агитатăрсем тырпул пухса кĕрес ĕçре те вирлĕ ĕçлемеле.

Шăхаљти парторг заместителе И. Зайцев.

Ертел лайăх ĕçлеме пуçларĕ

ТУРХАН Липăвкăри Ленин йачĕпе тăракан ертелĕн руководствине çĕнĕ çынсене суйланă хыççăн ĕç чылайах лайăхланчĕ. Ĕç дисциплинине çирĕплетни, ĕçлеме аван условисем туса пани рабочисен ĕçри хастарлăхне çĕклĕрĕ, стахановла йухăма вăйлатма май пачĕ.

Стахановецсен ретне çĕнĕ рабочисем хутшăнчĕç. Иотĕ çулсенче нормăна тултарайманнисем те халĕ нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Акă, 4-мĕш ставокпа ĕçлекен Зойă Йегорăвă йулташ ийуђ уйăхĕнче плана 200 процент, А. Морозăвă 138 процент тултарнă.

Çапла ĕçленипе ертел 1-мĕш квартăлти плана 105 процент, иккĕмĕш квартăл планне 106,3 процент тултарчĕ. Продукци пахалăхне те чылайах лайăхлатнă.

Ертелти рабочисем III-мĕш квартăлта татах та лайăхрах ĕçлесе плана 110 процентран кайа мар тултарма обйазательстă илчĕç

И. Архипăв.

Политкружоксенче

Канаш районĕнчи комсомол организацийĕсенче нумайĕшĕнче хĕллехи вăхăтра политкружок занђатийĕсем лайăх тата йĕркелĕ пулса пыратчĕç. Анчах халĕ, çăва тухнăранпа, нумай политкружоксем ĕçлеме пăрахрĕç.

Канашри МТС-ра, Торг уйрăмĕнче апрел уйăхĕнчен вара занђатисем пулман. Çавăн пекех районри Çĕнĕ Уйрумăва тата Кивĕ Шелтем йалĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацисенче политкружок занђатисем пулмаççĕ. Сезонлăх çĕнтерсе илнĕ.

Канаш районĕнчи комсомол комитечĕн çак çитменлĕхе халех пĕтермеле.

Й. Çтепанăв.

Чăваш орфографине çĕнетме кирлех

(Проекта сӳтсе-йавнă май)

Чăвашгосиздат редактăрĕсемпе ытти сотрудникĕсем чăваш орфографине çĕнĕрен кĕрекен правилăсене йатарласа вĕренме тытăнчĕç. Орфографи пройекчĕпе çывăх паллашнă хыççăн, пирĕн сотрудниксем çакнашкал шухăшсемпе килĕшрĕç.

Алфавита çĕнĕрен саспаллисем кĕртмеллех, ку ыйтăва хускатни питĕ вăхăтлă, питĕ кирлĕ ĕç. Проектра асăннă пунктсенчен чылайĕшне йышăнма тивеç. Чăвашла е саспаллипе çĕнĕрен алфавита кĕртнĕ э саспалли хăшпĕр сăмахсенче пĕр пекех йанăрани, тепĕр чухне я, ю тата йа, йу çырасси пирки те тӳрех татăклăн тĕрĕс çыраймасăр тăмали примерсем пурри кăштах ĕçре чăрмантарма пултарсассăн та, çĕнĕ алфавита, çĕнĕ правилăсене хăнăхса çитесси йавăрах пулас çук. Чăваш АССР Тĕпĕçтавкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ç. ийулĕн 5-мĕшĕнче йышăннă алфавит çине куçасси—чĕлхе куљтури йенĕпе чăваш ĕçхалăхĕ пысăк утăм малала йарса утнине кăтартат̆.

Пирĕн умра халĕ çав постановленийе тĕрĕссĕн те тĕплĕн пурнăçа кĕртесси тăрат̆. Çĕнĕрен йышăнса çирĕплетме хатĕрлекен правилăсене пур йенчен те пăхса тухса, научный анализ парса, ним иккĕлентермелле мар тĕреклĕ тумала.

Хăшпĕр йулташсем хăйсем практикăра сăнанă тăрăх проект пирки каланисене те шута илес пулат̆ (сăмахран, И. Г. Краснов учител стат̆йи т. ыт.).

Чăвашгосиздатра ĕçлекен йулташсем хăйсем йенчĕн проектра асăннă хăшпĕр пунктсене пачах улăштарма йе çĕнĕ формулировкăсем пама сĕнеççĕ:

1. Проектăн 5—42 мĕш стат̆йинченче: калат̆чĕ, пулат̆чĕ глаголсене (пулна ĕçе кăтартакан 3-мĕш сăпат глаголĕ) пулатчĕ, калатчĕ тесе çырма сĕнни йурăхла мар. Ун пек сĕнӳ т̆, ç, ӳ, ђ, љ саспаллисене пĕтерес ĕçе те пулăшаймаст̆. (Çав ыйтăва татмасăр ку правилă пурнăçланма тивĕççийех те курăнмаст̆). Тепĕр йенчен илесссĕн тата пирĕн чĕлхере ун пек тчĕ саспаллисемпе вĕçленекен формăсем пуррине те асăнма пулат̆: Йакăнатчĕ; тепре ферçĕпа сиксенех матчĕ; çӳлте вĕçекенни вăл хăлатчĕ; хăватчĕ; булатчĕ; халатчĕ т. ыт. Кун пек примерсем чылайăн, паллах, вăл тĕп сăлтав мар. Анчах та ытти йенесене асра тытса (вĕсем çинчен „Чăваш Коммунĕн" 160 (4973) №-рĕнче те çырнă) пирĕн сотрудниксем ку правилăна ĕлĕкхи пекех (калат̆чĕ, кулат̆чĕ) хăвармала тесе йышăнчĕç.

2. Проектăн 9-мĕш стат̆йин асăрхаттарăвĕнчи (примечанири): суд, сад, базар, арбуз йышши сăмахсене 9-мĕш тĕп параграфах куçармала. Сут, сат, пасар, парапан, арпус т. ыт. сăмахсене чăвашлатса ĕлĕкхи пекех çырма сĕнни—çĕнĕ орфографийе тĕплĕн пурнăçа кĕртме чăрмантарат̆ çеç.

Примечанире йе тĕп параграф çумне уйрăмăн хушсах акă: витре, кĕнеке, куршак сăмахсене ĕлĕкхи пекех çырасси çинчен калама тивет. Мĕншĕн тесессĕн ку сăмахсем чăваш чĕлхине тахçанах кĕнĕ çеç мар, вĕсем малтанхи формине те улăштарнă. Суд, сад сăмахсен категорине пачах кĕмеççĕ вĕсем. (Судисполнитель, садовод сăмахсене çырнă чухне сут, сат тенисем суд, сад формăна пырса лараççĕ).

3. Урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсене, вĕсен йулашки сыпăкĕ ударенилĕ мар пулсассăн, а, е, о, вырăнне ă, ĕ, çырмала: массă, экономикă т. ыт. Мĕншĕн тесессĕн склоненире вăл сăмахсене тĕрĕс калас пулсассăн çавах ă, ĕ, саспаллисем кĕртме йе улăштарма тивет: массăн, массăпа, массăран, массăна, массăсем, масси, масси-сем т. ыт.

Тепĕр йенчен çак пĕчĕк сăлтава та асра тытма тивĕç пулĕ: йат падежĕнчи ударенисĕр а саспаллипе пĕтекен сăмахсем: статистика, экономика, техника формă тепĕр формăпа пĕр йеврĕлĕ çыранат̆: „Пире техника (мĕн) „хушат̆, вăл ĕçе техника (кама) хушнă. Пайан епĕ статистика, техника, физика, метематика (çынсене) куртăм, т. ыт. примерсене танаштарса пăхăр.

Ку ыйтăва тĕплĕрехххĕн сӳтсе йавса татса пама кирлех.

Ия, ие, ий саспаллисемпе пĕтекен сăмахсене: Испания, постановление т. ыт. склоненире вĕсен вĕçĕнчи саспаллийĕсене кăларса пăрахмала тесе çырнă проектра: Испанин, Испанийе, Испанире, Испанипе, Испанисем т. ыт. те. Ку тĕрĕсех.

Апла пулсассăн, пирĕн шутпала, идея, Россия сăмахсен склоненийĕшĕн те çак правилăсемех саккуйлă шутланмала. Унта темиçе правилăсене уйăрса тăма пысăк уйрăмлăхах çук. Идея, идейĕ, идейĕнчи, идейине, идейĕнчи (идеянчи мар) т. ыт.

Ие саспаллисемпе пĕтекен сăмахсене хăшпĕр падежсенче мĕнле çырмалине те кăтартса памала: „постановление тухрĕ. Вăл постановленийе (постановлениене мар) ĕпĕ вуларăм" т. ыт.

5. 11-мĕш стат̆йара „князь, площадь" сăмахсене ытти формăсенче мĕнле çырмалине (склонение) тĕплĕрех катартса памала: площадĕ йе площачĕ—хăшĕ тĕрĕсрех пулат̆.

6. Хăшпĕр формăсене мĕнле çырассине кăтартса пыракан разделра (VI) т, ть, д, дь, саспаллисемпе вĕçленекен сăмахсене, вĕсем умĕнче хупă саспалли—согласный—пур пулсассăн, хăшпĕр формăра: властĕ (йе влаçĕ), социалистĕ (йе социалисĕ) тесе çырма кирли çинчен кăтартса парас пулат̆ (анчах социалисчĕ—йе социалистчĕ, влаçчĕ—тесе çырмала мар).

Ку пункт пирĕн çӳлерехре асăннă 5 мĕш пунктпа кăштах çыхăнат̆.

7. Сăмахсене пĕрле йе уйрăм çырассине кăтартса паракан разделра: улакурак, шывчăххи, йĕкĕхӳре, йӳçкăшман т. ыт. çавăн пек кайăк, выљăх-чĕрлĕх йапала йачĕсене пĕрле çырмала.

8. Ский, ская, ское; ный, ная, ное формăсемпе пĕтекен прилагателнăйсене—чăвашла ски тата нăй формăпа вĕçлесе çырма кирлине асăнмала: Япони тинĕç, Верховнăй Совет.

9. Ла, ле аффикссемпе çырма май килмен йе килĕшулĕ мар глаголсене „ту" глагол хушса çырма кирлĕ тĕрĕç: взрыват̆ тăват̆, командироват̆ тăват̆, доклад тăват̆, организоват̆ тăват̆, отражат̆ тăват̆. Çакăн пек формă халăх хушшинче тахçанах пур.

Канашлура редактăрсем тата чылай ыйтусем çинче чарăнса тăчĕç. Тĕп правилăсене пăхăнакан, анчах проектра асăнман хăшпĕр пунктсене орфографи словарĕпе грамматикă кĕнекисем кăларма хатĕрленĕ май, пичетре йе йатарласа пухăнса сӳтсе-йавас пулат̆. Раснах чарăну паллисем (знаки препинания, пунктуация) тата терминологи ыйтăвĕсем йенĕпе ĕçе хăвăртрах йĕркелесе çитерме кирли курăнат̆.

10. Çавсенчен пĕр ыйтăва çеç хускатăпăр. Вăл Чăвашгиз редактăрĕсен канашлăвĕнче учебниксен редактăрĕсем чăваш алфавитне тата тепĕр саспалли ё (йо) кĕртме сĕнни. Букварсенче, букварь хыççăн вуламали кĕнекесенче, сахал вĕреннисем валљи çырнă хăшпĕр массăлăй литературăра та летчица (ку таринччен љотчицă тесе çырнă, „Чăваш Коммунĕн" 150 (4472) №-рĕнче летчици тенĕ сăмаха), елка (йолкă), фантазер, доктринер, гипнотизер, счет, щетка, самолет, шлем, заем, Буденнăй, Гринев, вечеркă т. ыт. сăмахсене ё саспаллипе çырма тивет-ех.

Çĕнĕ алфавита йышăннă май пирĕн типографири наборлакан машинăсене, саспалли кассисене тата алăпа пичетлемелли (пишущая) машинкăсене те çĕнетмелле пулат̆. Çавăн чухне ё саспаллийе манса хăварас пулмаст̆. Чылай йулташсем ё (йо) саспаллийе алфавитах кĕртме сĕнеççĕ.

Н. Васанка.

— Хуйхăмăра кура председателĕ пурччĕ. Машинăсем валљи сарай тума пуçларăмăр. Каллех правлени çапкаланса пынă пирки ĕçе вĕçне çитерсе пулмарĕ, çапла вара пирĕн машинăсем çăвĕн-хĕлĕн йĕпе-сапа айĕнче тутăхса ларчĕç. Пирĕн колхозри халăх питĕ тăрăшса ĕçлеме йуратат̆. Анчах пуçлăхсем ку таранччен начар пулчĕç. Правленин ĕлĕкхи председателĕ пирки çав тери тарăхма тӳрĕ килчĕ,—унăн куçнĕ чакак сăхтăр, тесе ылханатпăр, мĕншĕн тесен пирĕн лайăх ĕçлеме пултаракан колхоз йатне йачĕ. Акă, колхоз кĕлетĕнче 500 центнĕр тырă пур, çĕнĕ тырра йышăнасси те килсе çитет. Халĕ ĕнтĕ тырă пиçсе çитет, тăррисем çунат çапса йурлаççĕ тӳпере, чăнах та хӳре вĕçне туй килчĕ. Ваттивĕтти таранччен çĕрĕн кунĕн ĕçлетпĕр, пурне те тĕрĕс-тĕкел туса çитерме кĕске вăхăтра вăл çитеймест. Колхоз лайăх ĕçлетĕр тесен, ĕçе чунтан парăнса ĕçлекен пуçлăхсем кирлĕ.

Чăваш республикĕнчен социализмлă ăмăрту договăрне тĕрĕслеме пынă делегацин членĕ—Йелчĕкри МТС аслă агрономĕ Çтепанов йулташ хăйсен районĕнчи паха ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

„Ударник" колхозăн кĕлетри тыррисенче сăвăссем—клешчсем кĕшĕлтетеççĕ. Çак сăтăрлă чĕрчунсемпе кĕрешес пирки колхозниксем питĕ тăрăшаççĕ, кĕлетсене çăвасăва тасатаççĕ, çиллетеççĕ тата пирĕн делегаци сĕннине итлесе кĕлет урай хăмисене тӳла хĕвел çине кăларма сăмах пачĕç.

III.

Хир лăпкă çил вĕрнипе хуллен те мăнкăмăллăн хумханат̆. Епĕр чылай районсем тăрăх, Хусантан пуçласа Чистайа çитиччен иртрĕмĕр, анчах алăпа акнă тырă курмарăмăр. Тутарстанри колхозсенче машинă техники чăннипех çĕр ĕçĕнче пысăк вырăн йышăннă. Вахитăв йачĕпе тăракан колхоз хирĕсем шыв пек таса, çынсем тырра ӳстерес пирки питĕ ырă ĕçлени сисĕнет. Колхоз председателĕ Гайсин йулташ колхоз çыннисене питĕ кăмăллă йĕркеленĕ. Вĕсен вейăлкăсем çитмен, анчах Саттарăв Лафар колхозник хăй тавра ăста етемсене пухса вейăлкăсем тума вĕрентет.

Колхозра йраçлă лашасене пăхса ӳстермели пысăк фермă пур. Унта халĕ 30 лаша хăйсен кĕрлĕхĕпе тата тĕреклĕхĕпе савăнтараççĕ, вĕсен хăлхисем магнит стерлкисем пек вылљаса тăраççĕ.

Епĕ чи малтанах Иваньук тусĕ—Миннигалей çинчен асăнăччĕ Лашасен картишĕ умĕнче хăрах уралă, çӳç пĕрчисем кăвакарнă етем кантра йават̆. Вăл пирĕнпе ăшă кăмăллăн паллăшат̆, аллисене кăкăрĕ çумне тытса калаçат̆:

— Епĕ,—тет вăл,—Гайнуллин Миннигалей.

Пурнăç алăкĕн хăлăпĕсене силлесе тарăхнă паттăр Миннигалей! Вăл граждăн вăрçи çулĕсенче мухтавпа витĕннĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулнă. Унпа пĕрле пулнă çынсен темиçе тавлăк хушши куç хупма та самант пулман. Гайнуллин Миннигалей тăварлă хирсем тăрăх ăйăхпа канăç мĕн иккенне пĕлмесĕр пĕтĕм халне панă. Миннигалей калаçнă чухне, çын йеккине килтерес тесе, йаланах хăйĕн шухăшне илемлетсе калама тата йурăсемпе çыхăнтарма йуратат̆. Вăл пире çапла каласа пачĕ:

— Патша вăрçи вăхăтĕнче çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ тĕнче куллилĕ начар окопсенче выртатпăр, нимĕç снарйачĕсем шилесе кăна тăраççĕ. Пирĕн перес килмест, тăван киле Чистай хули тавраш не тавăрăнас килет, килти выçă пурăнăç çинчен шухăш пĕр шит те каймаст̆, час-часах снарйадсем ӳкнĕ хыççăн йăсăрланса çĕкленнĕ тусана сывласа йурлаттăмăр:

Казан йăрак, Казан йăрак,
Казандан Мескев йăрак,
Кайтăр итĕм, илĕм йăрак,
Кайтмаса—йана йерек.

Миннигалей йулташăн йурри пирĕн чĕлхене куçарсан çапла пулат̆:

Хусан инçе, Хусан инçе,
Хусантан Мускав инçе.
Таврăнаттăм, килĕм инçе,
Таврăнмасан—чĕрем çунат̆.

Миннигалей ывăнат̆, кантра йавнă чух ура çинче тăма тӳрĕ килет, анчах йавăç ура ĕшелентерет.

— Есĕр мана ларса калаçнишĕн каçарăр,—тет вăл.—Авалхи тутар йумахне астăватăп. Патирек утравĕнче çӳлеле пăхсан çĕлĕк ӳкмелле тулă купи пулнă тет. Ăна урăхла халăх хуйхине виçмелли утрав, тесе йуптаратчĕç ваттисем. Шап-шурă сăвап кăвакарчăнĕ вунă çулта пĕр ре кăна çылăх утравне вĕçсе килсе пĕр пĕрчĕ тырра, халăхан хуйхине илсе кайнă, тет. Анчах халăхăн хуйхи ту пулнă, вара кăвакарчăн миçе мĕлйун çултан çав хуйха илсе кайса пĕтерне пулĕччĕши? Ылханлă патша ĕмĕрĕ пирĕн ĕнсе çине хуйхăсăр пуçне пĕр чĕптĕм савăнăç та паман. Пушкăрт çĕçен хирĕнче, Чĕпĕлĕ тавраш ĕнче Ахмет-Аксаккал бай патĕнче епĕ хамăн çывăх тусп—Иваньук ачай чăвашпа ĕçленĕ чух, вăл йаланах:

— Пирĕн ĕнсе çинче чул тӳсеймн йăварлăх пур, анчах епĕр тӳсетпĕр,—тетчĕ.

— Аслă Ленин тăрăшнипе революци пуçланчĕ,—тесе хăйĕн калавне малала тăсат̆ Миннигалей абзи (мучи).—Епĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулса шурă калтасене хирĕç кĕрешнĕ чух хамăн вăйа хунăшăн телейлĕ, халиччене савăнатăп. Сиваш кӳлли таврашĕнче 1920 çулхине тăварлă та йӳçĕ тусан йăсăрланат̆, таса сывлăша пĕрре кăна сывласа илессишĕн чĕре çунат̆. Тем пек вĕри çĕр çинче упаленсе, кашни утăмрах вилнĕ йулташсене хăварса малала шăватпăр, татти-сыппи сĕр пенипе пăшалсен кĕпçисем хĕрсе çитеççĕ. Çапла кĕрешсен-кĕрешсен, Врангĕл çарĕ пуçне сухатса тарма пуçларĕ. Çĕнтерӳ савăнăçĕ ӳмрах, анчах кĕтмен çĕртенех çĕр кисренчĕ, кайран вара лазаретре йывăр ыратăва туйса вăртнине астăватăп, хăрах урана снарйад йăтрисем татнă. Епĕр кĕрешнн, пирĕн çĕршыври тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсен чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем мул хуçисене хирĕç кĕрешсе хăйсен пурнăçне пани ахаљ пулмарĕ. Тĕлĕнмеле савăнăçлă пурнăç килчĕ, хамăр алла телей ӳсси кĕчĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕ Прохор Иванов-Хура тинĕсĕн тăварлă шывĕнче 15 çул хушши çĕрмесĕр выртни çинчен манăн ывăл хаçатра вуласа парсан, епĕ Перекопăн чаплă кунĕсене аса илнĕччĕ, Прохор Иванов пирĕн телейлĕ пурнăçа курма пултарайманнишĕн чун ыратат̆.

Миннигалей абзи, епĕ унăн тусне Иваньук мучине пăрахут çинче курнине каласа парсан, сиксе тăрат̆ те:

— Иваньук бĕлĕшĕм. Ех, Иваньук!—тет.—Епĕ унпа вутпа шыв витĕр тухнă. Унпа пĕрле акă çакă хамăн алăсемпе Хусантан пирĕн Чистай хулине çитмелĕх кантрасем йавнă. Ех, аван егем-çке! Мана вилĕмрен хăтарнă çын!

Çапла калаçат̆ Миннигалей абзи, Иваньук мучипе пĕрле Ахмет-Аксаккал пусмăрĕнче тарăхнă çинчен каланă чух, унăн куçĕнче куççуљ шăрçисем çуталаççĕ. Вăл малала калат̆:

— Куçесхапа Куçмесхан ывăлĕсем çинчен есĕр халлап илтнĕ пуљ. Вĕсем иккĕш кимпе уйăрайми туслă пулнă, пĕр-пĕриншĕн вутра çунма, çĕр айĕнче пĕтме хатĕр пулнă. Çапла вара пĕрнепĕри хӳтелесе Кайăн патши çĕрĕнче вилнĕ те вĕсене çырма иккĕ айккине хирĕ-хирĕç пытарнă. Вĕсен чĕрисенчен иккĕ тирек йăвăçĕ ӳссе ытакланнă. Иккĕ тирек пĕрлешнĕ вырăнта чăпар кукук ларса авăтнă, хăйĕн кĕввинче тимĕртен çирĕп туслăха ырланă. Чăваш, Тутар тата Мордва республикисем пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлени калама çук ырă та туслă çыхăну. Ĕлĕк, патша йыттисем шик-шăхарса çӳренĕ чух, халăхсем пĕрне-пĕри курайманлăха сăрнă тăрăшнă. Халĕ халăхсем пĕрне пĕри ĕçлеме пулăшаççĕ. Халăхсем туслă пулни—пирĕн аслă çĕршывăн тĕрекĕ.

Миннигалей пирĕн машинă хускалса кайсан, чылай вăхăт алă сулат̆. Пирĕн умра „Мускав" йатлă сӳртлă сĕлĕ, çĕкленсе кайас пек, хумханат̆.

Д. И. ПИСĂРЕВ



Пайан, ийулĕн 16-мĕшĕнче, паллă публицист тата литературă критикĕ Дмитрий Иванăвич Писăрев вилни 70 çул тултарчĕ.

Писăрев иртнĕ ĕмĕрте вырăс халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе мĕн пур вăйне парса ĕçлекенсенчен пĕри пулнă. 1860—70 çç. унăн çулăмлă статйисем Российăри çамрăксене революци йенне сулăнтарас ĕçре çав тери паха пулнă.

Д. И. Писăрев 1840 çулта ĕлĕкхи Орловски кĕпĕрнинче Знаменски йалĕнче çуралнă. Вăл гимназире вĕренсе вăтам пĕлӳ илнĕ. Унтан 1856—1861 çулсенче Петербургри университетра вĕреннĕ. Вĕреннĕ хушăрах Писăрев литературă ĕçне пуçăннă. 1858 çулхине ăна хĕрсем валли тухса тăракан „Рассвет" йатлă журналăн библиографи пайне йертсе пыма парсçĕ. Патша Российĕ—халăхсен тĕрми пулнă! Патша Российĕ çамрăк талантсене ӳстерсе аталантарма мар, вĕсене вăл çуралнă-çуралмах путарса пыма тăрăшнă, феодаллă-крепăсла йĕркене хирĕç пыракан литератăрсем çинчен тĕрлĕрен-тĕрлĕ елек сарнă, мăшкăлана. Д. И. Писăрев—талантлă публицист, критик, илемлĕ сăмахăн пысăк маçтарĕ, „Российăна Йевропă культурине кĕртме тăрăшаканскер", демократ пулнăскер, феодаллă-крепăсла йĕркене пĕтĕм чунĕ-чĕрипе курайманскер, Российăн мăшкăлне сахал мар чăтса иртернĕ. Унăн таланчĕ çамрăклах пĕтсе ларас хăрушлăх патне çитнĕ. 1859 çулхине вăйлă чирлет вăл, ывăнса çитет, ăсран тайалать, псçихиатрсен çуртĕнче пĕр çулталăка йахăн пурăнать.

Сывалса тухнă хыççăн Писăрев пĕтĕмпех литературă ĕçне парăнать. Анчах ку ĕçре ăна чунхавалĕпе çĕкленсе ирĕккĕн ĕçлеме памаççĕ. 1862 çулхи ийунь уйăхĕнче вăл Романăвсен йăхне пĕтересси çинчен, Российăн политикăлă тата общĕствăлă йĕркине улăштарма кирли çинчен пĕр витĕмлĕ статйа çырать—статйа пичетре тухиччен ăна арестлеççĕ. Петропавловски крепăçре вара вăл 4 çул çурă хушши ларать. Мĕнле йăвăр пулнă пулсассăн та талантлă критик хăй йуратнă ĕçне пăрахмасть: чи лайăх, чи витĕмлĕ статйисене вăл тĕрмере ларнă çĕрте çырать.

„Тĕнче улшăнать. Етемлĕх историне çĕнетме килнĕ вăй малала кайнăçем кайать. Крепăсла йĕрке хавшанăçемĕн хавшать. Пĕтĕм тĕнчене хăйĕн аллинче тытса тăракан капиталăн хăвачĕ сĕвĕрлет"—тет Писăрев тĕрмере ларнă çĕрте çырнă „Очерки из истории труда" йатлă статйинче (1863 ç.).

Тĕрмерен тухнă хыççăн Писăрев каллех тĕрлĕ журналсенче ĕçлеме пуçлать. Хăйĕн статйисенче, çавăн пекех, çывăх тăракан йулташĕсемпе час-часах иртернĕ калаçăвĕсенче те реакцилĕ журналистикăна хирĕç, литературăри реакцилĕ туртăмлăха хирĕç мĕн пур вăйне хурса кĕрешет. Литератăрсене таса чунлă пулма чĕнет, чăн пурнăçа пĕр пытармасăр кăтартакан произведенисем, пĕтĕм массăна хавхалантарма пултаракан произведенисем çырма вĕрентет.

„Литератăр пулас тесен чи малтанах пурнăçа йуратма пĕлмелле,—тет вăл „Реалисты" йатлă статйинче. Çав йурату вăл пурнăçăн лайăхлăхне, тасалăхне, ырлăхне йуратакан чăн-чăн йурату пулмала. Çав йурату вăл пĕтĕм айванлăха, ухмахлăха, тискерлĕхе хирĕç, пурнăç урапине кайала туртакансене, тĕрĕслĕх идейине пурнăçа кĕртме чăрмантаракансене хирĕç кăварланса тăракан аслă та таса курайманлăхпа таччăн çыхăнса тăмала".

Гейне çинчен çырнă статйинче акă мĕн калать Писăрев: „Пур мăшкăлсене те чăтса пĕтĕм етемлĕх тивĕçлĕхне çухатма хатĕр тăракан халăх, хăйне мăшкăл кăтартакансене хирĕç хĕçпăшал тытма хăракан халăх—вилĕм алăкĕ умĕнче тăрать, ăна хăйĕн кӳршисемех тара илме йе хăйĕн килĕнчи благодейатĕлсемех выçă вĕлерме пултараççĕ".

Çак сăмахсем пайаншăн та тĕрĕс сăмахсем, пайаншăн та кивелмен вĕсем. Ирĕклĕ совет çĕршывĕ хăйне темиçе ĕмĕр хушши пусмăрласа, мăшкăласа пурăннă йунĕçекенсене ĕнтĕ тахçанах кăкласа тăкнă. Мĕншĕн тесен, хăйĕн тивĕçлĕхне çухатса вилĕм алăкĕ умне пырасшăн пулман вăл, хĕçпăшал тытса тăшмансемпе хăйаррăн кĕрешме хăраса тăман.

Çак чăнлăха Испанири, Китайри халăхсем, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕсем те лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем хăйсен фашисла „кӳршисене" хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ, хăйсен тивĕçлĕхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн пурнăçне пама та хатĕр тăраççĕ.

Д. И. Писăревăн çутă сăмахĕсем аслăлăх ĕçĕнчи çынсен пурнăçĕнче нумай çĕнĕ шухăшсем çуратнă. Чылайĕшĕсем ăна мазăн малтанхи учител тесе хисеплеççĕ.

„Епĕ ăна вуласа нумай пĕлӳлĕх илтĕм,—тесе çырать академик А. Н. Бах хăйĕн асаилĕвĕнче.—Епĕ, çамрăклах ăслăлăх йенне туртăнăскер, Писăрева вуласассăн çеç хамăн ĕмĕте тĕрĕссĕн пурнăçлама пуçăнтăм. Ăна вуланă хыççăн епĕ хам общĕствăна нумай усă пама пултарассине ăнлантăм".

В. И. Ленин та хăй вăхăтĕнче Писăрева нумай вуланă, йуратнă.

Писăрева çамрăк литератăрсем хăйсен чи çывăх учителĕ вырăнне хунă. Вăл каланисене итленĕ. Вăл çырнă статйасене (çав шутрах цензурă ирĕк паман пирки пичетленмен статйасене те) пысăк хавхаланупа вуланă, аларан-алла çӳретнĕ.

Д. И. Писăрев пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Мĕн пурĕ те 28 çула çеç çитнĕ вăл. 1868 çулта, ийулĕн 16-мĕшĕнче Ригă хули çывăхĕнчи курортра шыва кĕнĕ чухне Балти тинĕсне путса вилнĕ.

Унтанпала 70 çул иртрĕ. Аслă Октйабĕр революцийĕччен Д. И. Писăревăн йачĕ хисеплĕ вырăн йышăнма пултарайман. Совет влаçĕ çеç унăн çутă йатне çӳлĕрен çӳле çĕклесе унăн вилĕмсĕр ĕçĕсене тивĕçлĕн хакларĕ. Ăна вулакансен йышĕ пиншерĕн, мĕлйуншарăн ӳсрĕ. Аслă çĕршыва тăванлăн пĕрлешнĕ мĕн пур аслă халăх хăйĕн чăн-чăн ывăлĕсене нихçан та манмасть—Чернышевский, Доброльубăв, Некрасăв йачĕсемпе пĕрлех вăл Писăревăн йатне, унăн ĕçне чĕрери кăмăлпа йышăнса тивĕçлĕн хисеплет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Металлран хатĕрленĕ пурне те кирлĕ йапаласем, кил-çуртра кирлĕ йапаласем тата сĕтел-пукан тавраш туса кăларасси çинчен

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совеçĕ, металлран хатĕрленĕ пурне те кирлĕ йапаласем, кил-çуртра кирлĕ йапаласем тата сĕтел-пукан тавраш (мебĕл) туса кăларасси çинчен постановлени йышăннă. Постановленире Машиностройени Халăх Комиссариачĕпе Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ 1938 çулти иртнĕ 5 уйăх хушшинче пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас плана çителĕксĕр тултарса пынине, çавăн пекех тата Йăвар промышленнăç Халăх Комиссариачĕн предприйатийĕсенче, алăсталăх кооперацийĕ тата вырăнти промышленнăç пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас плана тултарманнине палăртнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Машиностройени Халăх Комиссариатне тата Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатне чылай саватсенче пурне те кирлĕ таварсем туса хатĕрлекен цехсем туса, вĕсене ĕçе йама хушнă.

ССРС Государствă план комиççине çакна тума хушнă: республикăсенчи Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕсен 1939 çул планĕсене туса хатĕрленĕ чухне вăл Халăх Комиссариачĕсен йенĕпе металлран хатĕрленĕ пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе сарса йама кирлине, ку ĕçе уйрăманах Сойузăн инçетри районĕсенче сарса йама кирлине уйрăманах шута илме хушнă. Пурне те кирлĕ йапаласене мĕн чухлĕ хисеппе туса кăларассине тата вĕсен ассортименчĕ менле пулнине ССР Сойузĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕпе тата тивĕçлĕ Халăх Комиссариачĕсемпе пĕрле икĕ уйăхлă срукра пăхса çирĕплетес пулать, уйрăманах çак таварсене: стена çине çакса хумали, сĕтел çине лартмали тата алă çине çыхса çӳремели сехетсене, килте çĕвĕ çĕлемели машинăсемпе вĕсен пайĕсене, велоçипедсене, кил çуртра кирлĕ електричествăпа ĕçлекен йапаласене, радиоприйомниксене, радиолăсене, патефонсене, спорт хатĕрĕсене, сават-сапасене, вилкăсене, хачăсене, сахăр катмали хĕскĕчсене, фасонлă кроватсене, ала пек пружинăлă кроватсене, ачасене шыва кĕртмели пĕчĕк ваннăсене, апат çимели кашăксемпе чей кашăкĕсене, готовальнăсене, кил çуртри електросчотчиксене т. ыттисене те Совет Сойузĕнчи тата йут çĕршывсенчи чи лайăх образецсем тăрăх туса кăларас ĕçе сарса йарассине пурнăçа кĕртес пулать.

Пурне те кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе 1938 çулшăн панă заданисене пысăклатнă: Машиностройени Халăх Комиссариачĕ тăрăх—52 мĕлйун тенкелĕх, Оборона промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх—53 мĕлйун тенкĕлĕх, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ тăрăх—87 мĕлйун тенкĕлĕх (сутмали хакпа шутласан). Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх—20 мĕлйун тенкелĕх ӳстернĕ.

Сойузлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене республикăсенчи Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕсен предприйатийĕсенче 1938 çулта тата уйрăманах 1939 çулта пурне те кирлĕ таварсене пластмасăсенчен туса хатĕрлес ĕçе сарса йарас тĕлĕшпе тумали ĕçсене уйрăман пăхса тухма хушнă.

ССР Сойузĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариатне тавар хакĕсен инспекцине вăйлăлатма тата сĕтел-пукан таврашсен хакĕсем тĕлĕшĕпе киревсĕр ĕçсем тунисене хирĕç кĕрешес ĕçе вăйлăлатма хушнă. ССР Сойузĕн Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариатне, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне тата Всекоопромлессойуза вĕсем хăйсем туса кăларакан сĕтел-пукан таврашсен пахалăхне тĕрĕслесе тăма Инспекци тума ирĕк панă.

Суту илӳве начар организацилленине пула, рекламă çуккине пула, хаксене кирлĕ пек йĕркелесе йаманнине пула тата ытти сăлтавсене пула хăшпĕр таварсем начар сутăннă чухне, вăл таварсене сутса саланас тĕлĕшпе ССР Сойузĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ мĕн тума кирлине пĕтĕмĕшпех тума тивĕç. Ку тĕлĕшпе вăл таварсем çинчен рекламăсем урлă халăха пĕлтерес ĕçе лайăхлатас пулать, вăл таварсене çĕнĕ районсене сарас пулать, вĕсене туса кăларакан Халăх Комиссариачĕсене таварсен пахалăхпе лайăхлаттарас пулать, тивĕçлĕ тĕлсенче вăл таварсен хакне йӳнетме кирли çинчен правителствă умĕнче ыйту лартас пулать.

(ТАСС).

ССР Сойузĕнчи халăхсен стрелковăй спартакиади умĕн

Пăшал перекенсен районри ăмăртăвĕсем

ЕЛĔК. Ийулĕн 13—14-мĕшĕсенче Осоавиахимăн Елĕк райсовет тирĕнпе пăшал перекенсен районри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва 8 командă хутшăнчĕç, кашни командăра 5 çын.

Ăмăртура пĕчĕк калиберлă винтовкăпа 50 метртан 7-мĕш номерлĕ мишен çине печĕç. 1-мĕш упражненире 20 патрон (тăрса, чĕркуçланса ларса, выртса 5-шер патрон пемелле); 2-мĕш упражненире те 20 патрон (пурне те выртса пемелле).

Командăсен ăмăртăвĕнче 6-мĕш командă пуринчен те нумайрах очкосем туса малти вырăна тухрĕ. Командăра Çидăрав, Устинăв, Федăрав, Андрейĕв тата Данилăв йулташсем тăраççĕ.

Уйрăмăн ăмăртакансенчен чи ытларах очкосем тунă пилĕк çынна пăшал перекенсен республикăри ăмăртуне кайма уйăрчĕç. Республикăри ăмăртăва Çидăрав, Васильйĕв, Устинăв, Данилăв тата Тихăнăв йулташсем кайаççĕ.

Кунта çакна палăртса хăварас пулать: пăшал перекенсен ăмăртуне хатĕрленес йĕнĕпе районра Осоавиахим членĕсем хушшинче нимĕнле массăлă ĕçе те пулман. Çак политиклă пысăк ĕçе ПСÇЛКС райкомĕ те пăхах хутшăнмарĕ.

В. Йефремăв.

Сунд

Растратчица

ЙЕТĔРНЕ. 1937 çулти ийунĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа кăçалхи апрелĕн 12-мĕшне çитиччен Анастаси Степанăвнă Каверина Чăвашторгăн Йетĕрнери уйрăмĕнче продавщица пулса ĕçленĕ. Çав вăхăт хушшинче вăл патшалăх укçине 2.178 тенкĕ те 42 пус хăй çумне чикнĕ. Хăйĕн айăпне сирес шутпа Каверинă 608 тенкĕ те 28 пусне тӳленĕ, анчах ун çумне татах 1.570 тенкĕ те 14 пус йулнă.

Йетĕрне районĕнчи халăх сучĕ Каверинăна виçĕ çуллăха тĕрмене хупмала тата растратă тунă 1.570 тенкĕ те 14 пус укçана унран шыраса илмеле пригăвăр йышăнчĕ.

Чăваш АССР Верховнăй сучĕн кассаци коллегийĕ çак кунсенче халăх сучĕн пригăвăрне çирĕплетрĕ.

М. Йемелйанăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Испанири фронтсенче

Ийулĕн 13-мĕшĕнче Левант фронтĕнче Кастельон провинцинче республиканĕцсем Мульс районĕнче чылай позицисем йышăннă.

Теруел районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем, самольотсемпе танксем пулăшнипе, калама çук хăйаррăн вăрçнă хыççăн Çарриона (Теруелпе Сагунто хушшинчи çул çинче) тытса илнĕ.

Саррион тĕлĕнче пулнă сывлăшри çапăçура республикă авиацийĕ Итали 8 истребителне персе антарнă. Республиканĕцсен самольочĕсем нимĕн те сийенленмен.

(ТАСС).

Йапони авиацийĕн тискерлĕхĕ

Ийулĕн 13-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем Гуандун провинцин кăнтăр пайне вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе амансисем 326 çын шутланаççĕ. Цзечжен хулинче (Кантонран хĕвел тухăçнелле) хуларан тарса тухнă çынсен лагĕрĕ çине бомбăсем пăрахнă. 200 çынна йахăн вилнĕ.

Ийулĕн 14-мĕшĕнче Гуандун провинцин столици çине—Кантон çине Йапони самольочĕсем 30 бомба пăрахнă 150 çын вилнĕ тата 480 çын аманнă.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ йачĕпе

Мускаври предприйатисенчи рабочисем РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессине производствăлă çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

„Серп и молот" савăтра ийуль уйăхĕн 13 кунĕ хушшинче çĕнĕ мартен цехĕ заданине 103,2 процент, електричествă кăмакин коллективĕ—104,3 процент тултарнă. Ийулĕн малтанхи вунăкунлăхĕнче стахановĕцсем: Тульаков, Посейĕв, Суворăв, Шибанăв йулташсем тата ыт. те хурçă шăратас çĕрте пысăк çитĕнӳсем тунă.

Кирăв йачĕпе тăракан „Динамо" савăчĕ çессин усăлнă куна пысăк ĕç тухăçлăхĕшĕн тата отличнă пахалăхшăн большевикла кĕрешнипе паллă тăвать. Кузнечно сварочнăй цехри токăр стахановкă Иванова йулташ ийулĕн 13 мĕшĕнче сменăри нормăна 666 процент тултарнă. Çав цехри слесăр Чикин йулташ ийулĕн 14-мĕшĕнче виççĕ сменă нормине тултарнă.

Дзержинский йачĕпе тăракан Трехгорнăй мануфактурă хапрăкра работницăсенчен нумайĕшĕсем нумайрах станоксемпе ĕçлеме пуçлаççĕ. 24 ткачихă 8-шар станокпа ĕçлес вырăнне 12-шер станокпа ĕçлеме тытăнаççĕ.

Ленинград хулинчи тата Ленинград облăçĕнчи хапрăксемпе савăтсенче РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ йачĕпе социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанă.

Ижорский савăтри рабочисем РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ йачĕпе ийулĕн 13 мĕшĕнче стахановла вахтăна тăнă. 7-мĕш номерлĕ цехри комсомолĕцсем: Самусенко, Иваненко, Крамер йулташсем тата ыт. те вахтăна тăрсан малтанхи кунах 3—4-шар норма тултарнă.

„Большевик" савăтри електросварщик Зыковский йулташ нормăна 262 процент тултарать. Унăн ученици Гафонăвă йулташ нормăна 247 процент тултарать.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Мускавра

РСФСР Верховнăй Совечĕн Мускава пырса çитнĕ депутачĕсем çессии ĕçĕсем пуçланиччен столицăри чаплă вырăнсемпе тата культурă учрежденийĕсемпе паллашаççĕ. Вĕсем музейсене, выставкăсене, предприйатисене çӳреççĕ, шултра строителствăсене пырса кураççĕ.

Канмали кун депутатсен пĕр ушкăнĕ Шереметйевски музейне пырса курнă. Горький облăçĕнчи тата Тутар АССР-чи депутатсен ушкăнĕ Горький йачĕпе тăракан канупа культурă Тĕп паркне пырса курнă.

(ТАСС).

Чăвашгиза йаланлăх ĕçе кирлĕ:

икĕ бухгалтĕр

Пымали адрĕс: Шупашкар хули, Пичет çуртĕ, 4-мĕш хутлăх, тел. № 0—51

3—3

Шупашкарти ерех савăтне

работницăсем кирлĕ

Дирекци.

2—2

Икĕ лаша çухалнă

Пĕри—çутă-турă, 7 çулта, çилхи сылтăм йенеле. Çӳлĕш 136 сантиметр.

Тепри—тимĕр кăвак, 12 çулта, çилхи сылтăм йенеле, ĕнерчĕк вырăнче икĕ йенче те шурă. Çӳлĕш 1?4 сантиметр.

Пĕлекенсен çак адрĕсĕпе пĕлтермелле: Ибресинский р-н, дер. Айбечи, Ластечкину Илье.

Канашри нефте базăран

15 тоннă бензин тата пĕр тоннă легроин илмĕ

Главнефтрен илнĕ нарйада

Росснабсбыт çухатнă

Пăрахăçа тухнă тесе шутламала

Росснабсбыт.

Шупашкарти гостиницăна

Йалан ĕçлеме

счетовод-каççир тата бухгалтĕр помошникĕ

кирлĕ

Гостиницă кантурĕнче ыйтса пĕлмеле, ул. Карла Маркса д. № 8.

Дирекци.

Оборона Промышленнăç Халăх Комиссариачĕ системинчи

Хусанти С. М. Кирăв йачĕпе тăракан

ХИМИКО-ТЕХНОЛОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ

кĕркунне студентсене илесси çинчен пĕлтерет

1-мĕш курса кĕме заявленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

ССРС гражданĕсене 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, вăтам шкул пĕтернисене (пунă çуллă шкул, рабфак, техникум—специальнăç тăрăх 3 çултан кайа мар ĕç отажĕ пур пулсан) йе екстернат йĕрĕнпе вăтам шкул пĕтерсе аттестат илнисене илеççĕ.

Институт химически оборонă промышленнăçĕнче ĕçлеме инженер-химик-технологсене 4 специальнăç тăрăх тата конструировани тăрăх ĕçлекен инженер-механиксене, уйрăм хими савăчĕсене монтажласа химически йапаласене тăвакан машинăсене експлоатацилеттерне çĕрте ĕçлекен инженер-механиксене вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра вĕренмелли срук 5 çул. Мĕнле специальнăç тăрăх вĕренессине вĕренекенсем хăйсем суйласа илеççĕ.

Институт пĕтернисене Оборонă промышленнăç Халăх Комиссариачĕ хăйсен специальнăçĕ тăрăх ĕçлеме йарать.

1-мĕш курса вĕренме кĕрекенсем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен çак предметсем тăрăх испытани тытаççĕ: а) вырăс чĕлхи, б) политграмăтă, в) математикă, г) физикă, д) хими, е) пĕр-пĕр йутçĕршыв чĕлхи (нимĕç, акăлчан, францу) хăр-йăхăй суйласа илнĕ тăрăх.

Испытание Институт уйрăм хут йарса чĕннĕ тăрăх çеç пымала.

Испытание пынисем институтра тӳлевсĕр общежитипе, выртса тăмали йапаласенпе усă кураççĕ. Столовăйра апатланма тӳлевлĕ пулать.

Вăтам шкултан отличнă вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Испытани пулнă вăхăтра института кĕрекенсене валли аслă шкулсенчи преподавателсенчен консультаци организацилеççĕ.

Института илнисене стипенди параççĕ тата хватерсĕррисене (ытти хуласенчен пынисене) валли общежити пулать.

Института вĕренме кĕрес текенсен Аслă шкулсене вĕренме кĕмелли йĕркесем тăрăх (вăл йĕркесене ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн аслă шкулсен ĕçĕсен Комитечĕ çирĕплетнĕ) заявленипе пĕрле кирлĕ документсем йамала.

Вĕренме кĕмелли йĕркесене испытани программисемпе пĕрле институт ыйтса йанă тăрăх укçасăрах йарать.

Заявленисене тата çырусене çак адрĕспе йамала: гор. Казань, ул. Карла Маркса, д. № 66, приемная комиссия. Директору Казанского Химико-Технологического института им. С. М. Кирова.

Шупашкарти пульницăна

хуçалăх работникĕ

тата

кучĕрсем кирлĕ

Администраци.

ЧĂВАШВĂРМАН ТРЕСТНЕ

районсенче ĕçлеме:

1. Инженер-строител,
2. Çулйĕрпе тата ытти строителствăсенче ĕçлеме десятниксем,
3. Аслă финансистсем,
4. Аслă бухгалтĕрсем, бухгалтĕр-ревизорсем тата бухгалтĕрсем,
5. Кадрсене техникă йенĕпе вĕрентекен методистсем,
6. Вăрман хатĕрлев механизаци йенĕпе преподавателсем,
7. Плановиксем,
8. Техниксемпе нормировщиксем

КИРЛĔ

Условисем килĕшӳ тăрăх. Хватер параççĕ. Ĕçе кĕрес текенсен çак адрĕспе пымала:

г. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Чувашлеспром, отдел кадров. Тел. № 3-33, 1-46.

3—3

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан Тир-сăран савăтне

бухгалтĕрсем, счетоводсем

тата

каççир кирлĕ

Ворошиловская ул. д. № 27.

2—1

Шупашкарти 6-мĕш № Тĕп перекет кассине

квалификацилĕ контролĕрсем тата каççирсем кирлĕ

8 çулхи лаша çухалнă

Тĕсĕ—кĕрен, ĕнерчĕк вырăнĕ икĕ йенĕ те шурă, çилхи сылтăм йенеле. Сылтăм йенчи малти ури таканĕсĕр, ыттисем таканлă.

Пĕлекенсене çак адрĕспе пĕлтермелле: Аликовский район, дер. Вурманкасы, Мединковского с-совета Хрисанфову Максиму Хрисанфовичу.

Шупашкарти ерех савăтне

машинисткă тата статистик кирлĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 363

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 681.